Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 11 ЫТЛАРИКУН 9 (4822)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67. Ред. заместителӗн 0—88. Редакци секретарӗн 4—40. Дежурнӑйӑн 6—23

Парти резерви

Ленин—Сталин аслӑ партийӗ—ӗҫҫынисен малта пыракан отрйачӗ. Ҫак аслӑ парти социалисӑм кӗрешӳне йертсе пырать. Ленин—Сталин партийӗ, большевиксен партийӗ ССР Союзӗнчи ӗҫхалӑхне телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса пачӗ. Тӑшмансем социалисӑм строительстви ӗҫне аркатма хӑтланнине ҫапса аркатрӗ. Ӗҫҫыннисем большевиксен партине йуратаҫҫӗ, унӑн ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, пирӗн парти ӗҫӗ вӑл—ССР Союзӗнчи нумай мӗлйунлӑ халӑхсен тӑван ӗҫӗ, халӑх ӗҫӗ—большевиксен тӑван ӗҫӗ пулать.

Суйлавра коммунисcемпе партире тӑмаиннисен блокӗ ҫӗнтерни вӑл—историлӗ ҫӗнтерӳ. Ҫак историлӗ ҫӗнтерӳ пирӗн ҫӗршывӑн социалисӑм строительствин пур участкисенче те пысӑк ҫӗнтерӳсем тунипе ҫеҫ пулма пултарнӑ.

Социалисӑм строительстви ӗҫӗнче, тӑшмансене, троцкисла-бухаринла бандӑсене хирӗҫ хайаррӑн пынӑ кӗрешӳре, уйрӑмах—суйлав кампани вӑхӑтӗнче пирӗн парти партире тӑман актива нумай вӗрентсе ҫитӗнтерчӗ. Ҫак партире тӑман большевиксем Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ ҫав активиссенчен чи лайӑххисем большевикла парти ретне кӗме зайавленисем параҫҫӗ.

1936 ҫулти сентйабрӗн 29-мӗшӗнче Партин Тӗп Комитечӗ партие ҫӗнӗрен илмеле тӑвасси ҫинчен постановлени йышӑнчӗ. Ҫак вӑхӑтран вара партире тӑман большевиксем; производствӑри рабочи-стахановецсем, колхоз уй-хирӗсенчи стахановецсемпе ударниксем, парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекенсем, совет интеллигенцинчи чи лайӑх та шанчӑклӑ ҫынсем Ленин—Сталин парти ретне сахал мар кӗнӗ.

Партин Йетӗрнӗ райкомӗ ҫак кунсенче 7 комсомолец-активиса большевиксен парти ретне илчӗ. Куславкка райкомне партине илме ыйтса ҫырнӑ зайавленисем кашни кунах пыраҫҫӗ. Парти членӗн кандидачӗсем члена, сочувствуйушчисем кандидата куҫаҫҫӗ. Партин пуҫламӗш организацисем ҫумӗнчи сочувствуйушчисен ушкӑнӗсене ҫӗнӗ йышсем хутшӑнаҫҫӗ. Ҫаксем пурте пирӗн парти хӑйӗн амӑшӗпе—халӑхпа тачӑ ҫыхӑнса тӑнине, халӑх хушшинчен тухнӑ чи лайӑх ҫынсен, активиссен Ленин—Сталин парти ретне кӗрес хаваслӑх пысӑккине кӑтартса параҫҫӗ.

Парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен ҫынсем, пати ретне ӳстермели резервсем кашни районрах пур. Ҫав резервсем—ленинла комсомол, сочувствуйушчисем, производствӑри стахановецсем, общественӑла ӗҫри активиссем.

Анчах халӗ пирӗн партине илес тӗлӗшӗпе ӗҫлемен, партире тӑман активиссемпе ӗҫлемен, партине кӗме зайавлени паракан ҫынсене кирлӗ таран пулӑшу паман ПСК(б)П райкомӗсемпе пуҫламӗш организацисем те сахал мар-ха. Акӑ, Партин Сӗнтӗрвӑрри райкомне илӗпӗр. 1937 ҫулта Партин Сӗнтӗрвӑрри райкомӗ пурӗ те 4 кандидата ҫеҫ члена куҫарнӑ, икӗ ҫынна ҫеҫ партине илнӗ. Ҫак вӑхӑтрах парти райкомӗнче партине илме панӑ зайавленисем темиҫе уйӑх пӑхса тухмасӑр выртнӑ. Канаш, Патӑрйел районӗсенчи организацисенче партине илес ӗҫ питӗ начар тӑрать. Партине илес ӗҫ начар тӑнипе парторганизацисем партире тӑман активран уйӑрӑлса кайнӑ пирки ҫеҫ пулнӑ тесе ӑнланмала, урӑхла ниӗпле те ӑнланма май ҫук. Канаш, Патӑрйел, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче комсомол организацинче темиҫе ҫӗр ҫын, сочувствуйушчисем те пур, предприйатисенчи паллӑ стахановецсем те сахал мар. Резервӑ пысӑк, анчах парти райкомӗсемпе пуҫламӗш организацисем парти ретне тӑван ҫӗршывӑн чи шанчӑклӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсен шучӗне ӳстерес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлемеҫҫӗ. Ҫакна йанварӗн 10-мӗшӗнче „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра пичетленӗ. Шупашкар хулинчи пуҫламӗш организацисен сочувствуйушчийӗсен ҫырӑвӗсем пит те уҫҫӑн кӑтартаҫҫӗ.

Большевикла партин ҫулпуҫӗсемпе организаторӗсем—Ленин тата Сталин парти ретне йалахутаса тытма хушнӑ. ПСК(б)П Сталинла Тӗп Комитечӗ партине ҫӗнӗрен илесси ҫинчен йышӑннӑ постановленире кашни ҫынна тӗплӗн, уйрӑмӑн тӗрӗслесе илмелине ҫирӗппӗн кӑтартрӗ. Партине ушкӑнпа илес йӗрке большевикла партилӗх принципӗпе ҫыхӑнса тӑмасть. Пирӗн парти хӑйӗн кашни кандидатне, членне уйрӑмӑн суйласа илет, партине кӗрекен ҫынна пур йенчен те тӗрӗслет. Партине илнӗ чухне—устав тӑрӑх ӗҫлесси тӗп вырӑнта пулмала, устава никам та пӑсма пултараймасть.

Партине илесси парти ӗҫӗн чи ответлӑ участки пулса тӑрать. Ку ӗҫре кашни парторганизацин, кашни коммунисӑн сыхӑ пулмала. Анчах сыхӑлӑ пулатӑп тенӗ сӑлтавпа уйрӑм коммунисcем Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн, халӑх ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекенсенех рекомендаци памасӑр тӑни тӗрӗс мар. Ку вӑл большевик ӗҫӗпе ҫыхӑнмасть. Хӑйне ӗҫре кӑтартнӑ, ӗҫре тӗрӗсленнӗ ПСК(б)П ретне кӗресшӗн тӑрӑшакан партире тӑман большевиксене рекомендаци тупма пур майсемпе те пулӑшмала. Пирӗн ҫакна астумала: парти членӗсем пӗлӗт ҫинчен ӳкмеҫҫӗ. Фабрик-заводри, колхозпа совхозри стахановецсем, активиссем пайан партире мар, анчах ыран партире тӑракансем пулма пултараҫҫӗ, пулаҫҫӗ те.

Пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыври чи лайӑх ҫынсем Ленин—Сталин партине кӗме мухтавлӑн, ответлӑн хатӗрленеҫҫӗ. Парти организацисен задачӗ—кашнине уйрӑмӑн суйласа илес большевикла принципа ҫирӗп тытса пырса, ҫав совет патриочӗсене хӑйсен ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртме пулӑшасси пулать.

Ҫуракине хатӗрленнӗ ҫӗрте социалисӑмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен йышӑннӑ решени совет йалне чӗрӗн хускатса йачӗ. Партипе правительствӑн решенине ӳтсе-йавма колхозсемпе совхозсенче, машинӑ-тракторлӑ станцисенче йатарлӑса пухусем пулса иртеҫҫӗ.

Чашник районӗнчи (Белоруҫҫи) „Жарино" колхоз пухувӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутачӗ „Жарино" колхоз председателӗ Й. И. Папкова йулташ хӗрӳлӗ сӑмах тухса каланӑ.

Вӑл колхозниксене партипе правительствӑн решенине ҫуракине стахановла хатӗрленнипе ответлеме чӗннӗ. Гектартан 25—30 центнер тӗштырӑ туса илес тӗлӗшпе бригадӑсем ҫав пухурах социалисӑмлӑ ӑмӑрту договорӗсем тунӑ.

Лебединск районӗнчи (Харьков облӑҫӗ) „Путь Ленина" колхозра пысӑк пуху пулса иртнӗ. Ку колхоза ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутачӗ А. Н. Линник йертсе пырать. Ҫуракине активлӑн хатӗрленсе, ҫав ертелӗн колхозникӗсем инвентарсене йусаса пӗтернӗ, вӑрлӑхсене ҫителӗклӗ хатӗрлесе татсa хунӑ, хальхи вӑхӑтра вӗсем тислӗк тата ҫӗре ҫемҫетмели вырӑнти ытти имҫамсене уйа турттараҫҫӗ. Пуху тӗштырӑсемпе сахӑр кӑшманӗн тухӑҫне кӑҫал икӗ хут ӳстерме йышӑннӑ.

Чебсарск районӗнче (Володарск облӑҫӗ) йатарласа канашлу пулса иртнӗ, вӑл канашлура ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутачӗ Й. А. Арташева пулнӑ. Ҫавӑн пек канашлусем пулни ҫинчен Куйбышев, Оренбург т. ыт. облӑҫсенчен те пӗлтереҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсем ҫеҫ мар, тата пӗтӗм районсем ӑмӑртма пуҫлаҫҫӗ. Краснодар крайӗнчи Кавевск районӗнчи колхозсем Брюховецк районӗнчи колхозсемпе ӑмӑртаҫҫӗ. Кӑҫал кашни район 5 мӗлйун пит таран кайа мар тӗштырӑ туса илме обйазательствӑ панӑ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн ӑмӑртса, колхозниксем вӑрлӑх ҫине уйрӑмах хытӑ ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Сӑмахран, Тельман йачӗпе тӑракан колхозра (Новохаперск р., Воронеж облӑҫӗ) вӑрлӑхсене тӗрӗслесе пӑхса пӗр ҫӗре пуҫтарса хунӑ. Ҫӗр пӗрчӗ тулӑран кунта 97 пӗрчӗ шӑтнӑ. Одессӑ облӑҫӗнче Любашевск, Ровньанск, Мостовск тата Горосуловск районӗсенчи колхозсем иртнӗ ҫулсенчи опыт тӑрӑх вӑрлӑха алӑпа пӗрчӗн-пӗрчӗн тасатаҫҫӗ.

Малта пыракан машинӑ-тракторлӑ станцисемпе мастерскойсем партипе правительствӑ решенине тракторсене йусанӑ ҫӗрте стахановла ӗҫлесе тата плансене срукчен тултарса ответлеҫҫӗ. Зеркальск МТС станчинчи стахановецсем (Алтай крайӗ) ӑмӑртун малтанхи кунӗсене халиччен пулман пысӑк ӗҫтухӑҫлӑхпе паллӑ тунӑ. Слесӑрсем — Федоров, Дйаконов тата Йалушкин йулташсем хӑйсен пӗр кунхи нормисене 400 процент тултараҫҫӗ.

Колхоз тимӗрҫисем те ӑмӑртува хутшӑнаҫҫӗ. Кузнецк районӗнчи (Куйбышев облӑҫӗ) „Красный Октябрь" колхозра тимӗрҫӗсем сейалкӑсемпе сӳресене тата культиваторсене йалтах йусаса пӗтернӗ.

(ТАСС).

Пӗтӗм Ҫойузри выльӑх-чӗрлӗх переписӗ

ЛЕНИНГРАД, йанварӗн 9-мӗш (ТАСС). Шӑп кӑтартнӑ срукра—йанварӗн 8-мӗшӗнче—Ленинград облӑҫӗ выльӑх-чӗрлӗх переписне туса ҫитерчӗ.

26 районран тӑрӑтнӑ сведенисем тӑрӑх, колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ чылай ӳснӗ. Нумай колхозсенче ҫӗнӗрен выльӑх карттисем тунӑ. Выльӑхсене пӑхас ӗҫ лайӑхланнӑ.

Мускава, ССР Сойузӗн Аслӑ Совет ҫеҫҫине

Совет Сойузӗн столицине—Мускава—ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫине хутшӑнса ӗҫлеме депутатсем кашни кун килсе тараҫҫӗ. Делегацисен пӗр пайӗ хальхи вӑхӑтра ҫул ҫинче, пурте килсе ҫитеймен-ха.

Ӗҫҫыннисем хӑйсен посланцисене ӑшшӑн ӑсатса йараҫҫӗ. Камышинск районӗнчи (Сталинград облӑҫӗ) Таловск МТСтанцин 5-мӗш №-лӗ отрйад трактористӗсем депутата Мухортова йулташа панӑ наказра ҫапла ҫыраҫҫӗ:

„Епӗр ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫине тата хаклӑ Сталин йулташа пирӗнтен хӗрӳлӗ салам калама ыйтатпӑр. Ҫавӑн пекех тата йанварӗн 12-мӗшӗнчи историлӗ куна епӗр тракторсене йусанӑ ҫӗрте производствӑлӑ ҫӗнтерӳсем тунипе кӗтсе илни ҫинчен те каласа кӑтартма ыйтатпӑр".

Удмурт республикӗнчи депутатсем хӑйсем ҫеҫҫине тухса кайнине производствӑлӑ пысӑк ҫитӗнӳсемпе паллӑ тунӑ. Ижсталь заводри кузнечно-термический цехри сменӑ начальникӗ орденоносец Градобойев йулташ, сменӑсемпе бригадӑсенче ӑмӑртува вӑйлатса йарса, производствӑ заданийӗсене рекордлӑн пурнӑҫа кӗртме пултарнӑ. Унӑн сменинчи Поздышев йулташ бригади йанварӗн 4-мӗшӗнче нормӑна 276 процент, йанварӗн 5-мӗшӗнче—384 процент тултарнӑ.

Мускава, ССР Сойузӗн Аслӑ Совет ҫеҫҫине Белорус СС Республикӗнчен, Коми АСС Республикӗнчен, Магнитогорскран, Крым АСС Республикӗнчен, Свердловск тата Одесса облӑҫӗсенчен депутатсем тухса кайнӑ.

(ТАСС).

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫийӗ йачӗпе

Ҫӗршер рабочи икшер нормӑ тата ытларах та тултараҫҫӗ

ХАРЬКОВ, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Харьковри предприйатисенчи стахановецсемпе ударниксем ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫине ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илеҫҫӗ. Харьковри Сталин йачӗпе тӑракан електромеханически тата трубогенератор заводӗн пине йахӑн рабочийӗсем сменӑра икшер нормӑ тата ытларах та тултараҫҫӗ. Заводра стахановла цехсем 72. Завод коллективӗ кӑҫал пӗтӗм завода стахановла тӑвасшӑн кӗрешет.

Стахановецсен чаплӑ ӗҫӗ

МАРИУПОЛЬ, йанварӗн 9-мӗш. (ТАСС). Илйич йачӗпе тӑракан заводӑн улттӑмӗш прокат цехӗнче ССР Сойузӗн Аслӑ Совет депутачӗ, паллӑ прокатчик Мирошниченко йулташ ӗҫлет, цех декабӗр уйӑхӗн пуҫламӗшӗнчен тытӑнса заданийе кашни кунах иртерсе тултарса пырать. Йанварӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче цех заданирен иртерсе 518 тоннӑ прокат панӑ, плана 120 процент тултарнӑ.

Заводӑн мартен цехӗсенчи 36 сталевартан 27-шӗ кӑмакасем мӗн чухлӗ хурҫӑ шӑратса кӑларма пултарнинчен иртерсе ӗҫленӗ. Ҫав нашкалах тата „Азовсталь" сталеварӗсем те йанварӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче плана иртерсе тултарнӑ.

ТУЛА, йанварӗн 9-мӗш. (ТАСС) „Новая Тула" заводри слесӑр-стахановец Жаров йулташ питӗ лайӑх ӗҫлет. Ҫӗнӗ ҫула кӗтсе илсе вӑл нормӑна 1.625 процент тултарнӑ. Йанварӗн 7-мӗшӗнче нормӑна 2.064 процент тултарса тата та пысӑкрах ӗҫтухӑҫлӑхӗ тунӑ. Жаров йулташ сменӑра вӑтамӑн илсен 8—9 нормӑ парать. Унӑн опычӗпе ытти рабочисем те усӑ кураҫҫӗ.

Николай Алексейевич Некрасовӑн йатне Совет халӑхӗ йуратса чыслать

Ҫак кунсенче ҫӗршывӑн пӗтӗм кӗтесӗсенчен—Казахстан столиципе инҫетри Камчаткӑран, Ленин хулипе поет ҫуралнӑ Йузеин йалӗнчен пирӗн ҫӗршывӑн пӗтӗм халӑхӗсене ҫывӑх та тӑван аслӑ поет, самодержавлӑ крепосной йӗркепе кӗрешекен ҫулӑмлӑ борец йачӗпе чаплӑ вечӗрсем, литературӑ концерчӗсем, докладсем тата выставкӑсем пулса иртни ҫинчен хыпарсем килеҫҫӗ.

Мускаври Сталин йачӗпе тӑракан автомобил заводӗнчи рабочисем, инженерсемпе техниксем, мӗн пурӗ 500 ҫынна йахӑн, хӑйсен культурӑ дворецне Некрасов йачӗпе тунӑ вечӗра пухӑннӑ. Вӑл вечӗр тӗлне Ленин йачӗпе тӑракан Пӗтӗм Сойузри библиотекӑн филиалӗ дворецра поетӑн пурнӑҫӗпе, пултарулӑхӗпе паллаштаракан выставкӑ уҫнӑ.

Некрасов произведенийӗсене пӗчӗкки-пысӑккипех, пурте интересленсе вӗренеҫҫӗ. Йубилейри литературӑ вечӗрӗсенче Ленинградри рабочисем нумайӗшӗ йуратнӑ поетӑн пултарулӑхӗ ҫинчен докладсем тухса каланӑ. ОГПУ йачӗпе тӑракан оптико-механический заводри Йефим Рисин комсомолец Некрасов произведенийӗн материалӗсем тӑрӑх „Утмӑлӑмӗш ҫулсенчи хресченсен пурнӑҫӗ" темӑпа, ҫамрӑк работницӑ Иванкова „Некрасов произведенийӗсенчи хӗрарӑм сӑнӗ" темӑпа доклад хатӗрленӗ.

Камчаткӑ ҫинчи Петропавловскра пулӑ комбинатӗнче, шкулсенче, клубсенче тата хӗрлӗ кӗтессенче Некрасова асӑнса вечӗрсем туса иртереҫҫӗ, поет произведенийӗсене ушкӑнпа вулаҫҫӗ. Йубилей кунӗсем умӗн халӑх Некрасов произведенийӗсене питӗ нумай ыйтма пуҫланӑ. КОГИЗ магазинӗнче унӑн мӗн пур кӗнекисене сутса пӗтернӗ.

(ТАСС).

Чикӗри заставӑра

ХӖВЕЛАНӐҪРИ ЧИКӖ. (ТАСС). Очкасов йулташ йертсе пыракан отрйадри пограничниксем ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫҫийӗ уҫӑлассине пит хытӑ кӗтеҫҫӗ. Ҫеҫҫи ӗҫленӗ кунсенче совет чиккине сыхламали вахтӑна чи лайӑх часовойсем—халӑхӑн усал тӑшманӗсене, шпионсене, диверсантсене тытнӑ ҫӗрте хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ часовойсем тӑраҫҫӗ.

— Епӗр хамӑрӑн чикӗсене тата ҫивӗчрех, тата вичкӗнрех сыхлӑпӑр,—тесе калать паллӑ пограничник Зайцев йулташ.—Совет пограничникӗсем пирӗн таса чикӗсене пӑсма никама та ирӗк паманнине тӑшмансем пӗлсе тӑччӗр.

Зайцев йулташӑн сӑмахӗ нихӑҫан та ӗҫрен уйӑрӑлса каймасть. Нумай йах та пулмасть, вахтӑра тӑнӑ чухне, вӑл тата тепӗр пограничник Козодайев йулташ чикӗ урлӑ каҫса килнӗ ҫынӑн ҫӗнӗ йӗррине курнӑ. Малтан службӑри йытӑна йанӑ та, хӑйсем те ҫав йӗр хыҫҫӑн кайнӑ. Ҫилтӑвӑл чарӑнма пӗлмесӗр кӗрленӗ. Чикӗ урлӑ каҫса килнӗ ҫынна тупма ҫакӑн пек тӗттӗм те ҫилтӑвӑллӑ каҫра ҫав тери йӑвӑр пулнӑ. Анчах та совет часовойӗсен сыхӑлӑхӗпе вичкӗнлӗхӗ ҫӗнтернӗ. Чикӗ урлӑ каҫса килнӗ ҫынна йарса тытнӑ. Вӑл ҫын—пӗр йутҫӗршыв разведкин пысӑк шпионӗ пулнӑ мӗн.

Ҫӗрмамӑкӗ пухса кӗртни

1937 ҫулшӑн (1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшне) Совет Сойузӗнче 2.473.459 тоннӑ ҫӗрмамӑк пухса кӗртнӗ. Плана 98,4 процент тултарнӑ. Вӑл 1936 ҫулта пухса кӗртнинчен 142.170 тоннӑ ытларах пулать.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хӗвелтухӑҫри (Арагонири) фронт

Хӗвелтухӑҫри фронтӑн Теруел участкинчи вӑйлӑ ҫапӑҫусем йанварӗн 8-мӗшӗнче кӑштах вӑйсӑрланнӑ, анчах та ҫак участкӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ секторӗнче пӑлхавҫӑсем халь те республикӑ ҫарӗсем ҫине атакӑ тума хӑтланаҫҫӗ. Теруелтен ҫурҫӗр йенче Селадас районӗнче пӑлхавҫӑсем демонстраци тунӑ, ӑна республиканецсем ҫӑмӑллӑнах сирсе пӑрахнӑ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах пӑлхавҫӑсем Муела де Теруле тата 1.076, 1.062 текен высотасен районӗнче республиканецсен позицийӗсем ҫине чылай вӑйлӑн наступлени тунӑ. Анчах та ҫак участкӑра та республикӑ ҫарӗсем пӑлхавҫӑсене сирсе йанӑ, вӗсем чылай ҫухатусем туса ирӗксӗрех кайала чакнӑ.

Пӑлхавҫӑсем Теруел патӗнче 23 кун хушшинче тунӑ ҫухатусем калама ҫук пысӑк. Гавас агенстви пӗлтернӗ тӑрӑх, вилнисемпе аманнисемсӗр пуҫне, пӑлхавҫӑсен чылай салтакӗсемпе офицерӗсем сивӗпе сийен курнӑ. Пӑлхавҫӑсен госпитальӗсем алли-урине тӑм илнӗ салтаксемпе тулса ларнӑ.

Йанварӗн 7-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсен Теруел гарнизонӗнчи начальникӗ подполковник Рей Д'аркур Теруел участкинчи республикӑ ҫарӗсен командуйушчине телефонпа чӗннӗ те, пӑлхавҫӑсем питӗрӗнсе ларнӑ ҫуртсенчен граждӑнла халӑха илсе тухасси ҫинчен тата ҫарсем парӑнасси ҫинчен калаҫма пуҫланӑ. Йанварӗн 7-мӗшӗнче каҫхине пӑлхавҫӑсем пӗтӗмпе 1.500 ҫын тата вӗсемпе пӗрле подполковник Рей Д'аркур республиканецсен аллине парӑннӑ. Парӑнмасӑр хирӗҫ тӑракансенчен Санта Клара мӑнастырне питӗрӗнсе ларнисен ушкӑнӗ ҫеҫ йулнӑ. Анчах та каҫ пулсан ҫав ушкӑн та республика ҫарӗсене парӑннӑ, ҫапла вара Теруелте хирӗҫ тӑракан пӑлхавҫӑсен йулашки йӑвисене пӗтерсе хунӑ. Парӑннӑ пӑлхавҫӑсем хушшинче (Санта Клара мӑнастырӗнче пурӑннисем хушшинче) Теруел епископӗ те пур.

Республикӑ командованийӗ тыткӑна илнӗ тата аманнӑ пӑлхавҫӑсене Валенсири йатарласа уйӑрнӑ ҫуртсемпе госпитальсене куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлет.

Пӑлхавҫӑсем пӗтӗмпех парӑниччен кӑшт малтанрах, пӑлхавҫӑсем питӗрӗнсе ларнӑ госпиталь ҫуртӗнчен граждӑнла халӑха илсе тухнӑ. Граждӑнла халӑха урӑх ҫӗре куҫарас ӗҫ (евакуаци) 14 сехетре пуҫланнӑ та, сӗм ҫӗрлеччен(ех) тӑсӑлнӑ. Урӑх ҫӗре куҫаракан ҫынсем калама ҫук хӑрушлӑхра пурӑннӑ. Нумайӑшӗ тӑнҫӑр пулса ӳкнӗ. Чи малтанах вӗсем республикӑ ҫарӗн бойецӗсенчен шыв пама ыйтнӑ. Граждӑнла халӑха урӑх ҫӗре куҫарас ӗҫе Теруел участкин командуйушчийӗ хӑй йертсе пынӑ.

Гвадалахарӑ районӗнче республиканецсем патне пӑлхавҫӑсен отделенийӗ пынӑ, вӑл отделенире икӗ унтер-офицер тата 15 салтак. Тарса пынӑ салтаксем Теруеле тытса илни пӑлхавҫӑсен тылӗнче тата ҫарӗсенче ҫав тери пысӑккӑн тӗлӗнтерни ҫинчен каласа панӑ.

Тарса пынисем кӑтартса панӑ тӑрӑх, Естрамадур провинцинчи Касерес хулинче декабӗрӗн 26-мӗшӗнче восстани сиксе тухнӑ, вӑл восстанийе пӑлхавҫӑсем виҫӗ кунтан путарса лартнӑ. Восстание хутшӑннӑ салтаксемпе хресченсене пӑлхавҫӑсем 150 ҫын ытла персе вӗлернӗ.

Авиаци ӗҫӗсем

Йанварӗн 7-мӗшпе 8-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсен авиацийӗ Барселонӑ ҫине икӗ хутчен вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Йанварӗн 7-мӗшӗнче тапӑннӑ хыҫҫӑн 7 ҫын вилнӗ тата 7 ҫын аманнӑ. Йанварӗн 8-мӗшӗнче 20 ҫын таран вӗлернӗ.

Йанварӗн 7-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсен 5 самолечӗ Сагунто ҫине (Валенсирен ҫурҫӗр йенче) вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Республиканецсен зенитлӑ артиллерийӗ пӑлхавҫӑсен самолечӗсенчен пӗрине татса антарнӑ, вӑл самолет тинӗсе ӳкнӗ те екипажӗ мӗнӗпех шыва путнӑ.

Мадрид коммунисӗсем фронтсенче

БАРСЕЛОНА, йанварӗн 8-мӗш. Испани компартин органӗ „Мундо Обреро" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, компартин Мадрид организацинчи 40 пин членӗ фронтсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Вӑтам Китайра

ХАНЬКОУ, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Йанварӗн 7-мӗшӗнче Таньцзин—Пукоу чукунҫулӗн кӑнтӑр йенчи участкин секторӗнче китайецсем Йапони ҫарӗсем Мигуань ҫине тунӑ атакине сирсе пӑрахнӑ.

Йанварӗн 7-мӗшӗнче Китай самолечӗсем Ухури аеродром ҫине тата Уху патӗнче (Нанкинран тӑварах) Йанцзы йуханшывӗ ҫинче тӑракан Йапонин ҫар карапӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ШАНХАЙ, йанварӗн 9-мӗш. (ТАСС). Китайри партизан отрйачӗсем ҫине тӑрса контрнаступлени тунипе Чуаншана (Шанхайран 20 километр кӑнтӑрала) йышӑнса илнӗ.

Ҫурҫӗр Китайра

ХАНЬКОУ, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Шаньдун провинцин фронтӗнче Йапони ҫарӗсем Таньзинь—Пукоу чукунҫулӗн тӑрӑхӗнче тапӑнаҫҫӗ. Чукунҫул тӑрӑх малала пырса, йапонецсем Тенҫане (Йанчжоуран кӑнтӑрарах) атакӑлаҫҫӗ. Сулахай флангра Йапонин тӗп вӑйӗсем Синтайран (Цзиньрен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнеле, Шаньдун провинцин столици) кӑнтӑрарах пӗр ҫӗре пухӑннӑ. Сылтӑм флангра ҫапӑҫусем Цзинин таврашӗнче (Цзиньанрен кӑнтӑрарах) пыраҫҫӗ.

Кӑнтӑр Китайра

ЛОНДОН, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Йанварӗн 6-мӗшӗнче Йапони самолечӗсем Пакхохри фронтсем ҫине (Гуандун провинцин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче) бомбӑсем пӑрахнӑ тата Саньшуй чукунҫулӗ ҫинчи ҫар ешалонӗсем ҫине пулеметсенчен пенӗ.

ХАНЬКОУ, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Ӗнер Йапонин 24 самолечӗ Наньчан ҫине (Цзйанси провинцин столици) тапӑннӑ. Хула ҫинче сывлӑшри ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Хула таврашӗнче 30 бомбӑ пӑрахнӑ. Йапонин пӗр самолетне персе ӳкернӗ.

Китай Йапони агреҫҫине отпор пама хатӗрленет

ХАНЬКОУ, йанварӗн 9-мӗш. (ТАСС). Хальхи вӑхӑтра Китайри вӑрҫӑн тӗп вырӑнӗ Таньцзинь—Пукоу чукунҫулӗ пулса тӑрать. Ытти фронтсенчи ҫапӑҫусем йулашки кунсем хушшинче ытла вӑйлансах кайман. Йапони планӗсем тӑрӑх, Шаньцун провинцинчи фронта Йанцзы йуханшывӗн ҫурҫӗр йенче тӑракан фронтпа пӗрлештерни Ҫурҫӗр Китайа тата тинӗс хӗрӗнчи пысӑк тӑрӑха ҫарпа ҫавӑрса илме пулӑшмала. Анчах та китайецсен партизанла кӗрешӳвӗ вӑйланса пынӑ чухне ку операцине тума ҫӑмӑлах мар. Йапонин ҫав фрончӗсем пӗр-пӗринчен чукунҫул тӑрӑх 420 километрта тӑраҫҫӗ. Лунхай чукунҫулӗ тӑрӑх, Ланьйунран тинӗс патӗнче Китайӑн вӑрҫӑччен(ех) тунӑ укрепленисен линийӗ 500 километр тӑршшӗ тӑсӑлать. Пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан чукунҫул узелӗ—Сӳйчжоу районӗнче Китай ҫӗнӗ укрепленисем тунӑ. Халӗ Китай ҫарӗсене куҫарасси тата чаҫсене улӑштарасси питӗ вӑйлӑн пырать. Иккӗмӗш ҫар зонине йертсе пыракан Ли Цзун-Жень Цзйансу, Шаньдун тата Аньхуей провинцисенче 5 пин студента мобилизацилеме приказ панӑ. Вӑл студентсене ҫара пулӑшма мобилизацилеҫҫӗ. Хӑйсен ирӗкӗпе мобилизациленнӗ икӗ пин студент ҫара пынӑ та ӗнтӗ, вӗсем ҫар ӗҫне вӑйлӑн вӗренеҫҫӗ.

Китай ҫарӗн тӗп ҫитменлӗхӗ вӑл—пӗтӗм фронтсем валли пӗрлӗхлӗ командовани тата пӗрлӗхлӗ оперативлӑ план ҫукки пулса тӑрать. Нацилӗ оборонӑ комитечӗ иртнӗ ернере пулса иртнӗ канашлура генеральнӑй штаба улӑштарса ҫӗнетесси ҫинчен кирлӗ решенисем йышӑннӑ. Уйрӑмӑн кама-кама улӑштарса вырнаҫтарасси халь официаллӑ паллӑ мар-ха. Штаб политпайӗ тата ҫара улӑштарса ҫӗнетессипе ӗҫлекен пай тунӑ. Китайри ҫар ҫыннисем хушшинче ҫӗнӗрен вунҫӑр дивизи мобилизацилеме хатӗрленни ҫинчен, тыла организацилес тата вӑрҫӑ промышленнӑҫне йертсе пырас тӗлӗшпе ӗҫлеме йатарласа министерствӑ тӑвасси ҫинче ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Пӗрлӗхлӗ командовани ыйтуне йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртсенех татса параҫҫӗ, тесе кӗтеҫҫӗ. Ҫак ҫарпа политикӑлӑ мӗн пур ӗҫсем фронтӑн лару-тӑруне тӗпренех улӑштарса, вӑрҫӑ ӗҫне пысӑк пулӑшу парасси паллах.

Çуракине хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йанварĕн 2-мĕшĕнче Чăваш республикинче çуракине хатĕрленес ĕç пачах çителĕксĕр пыраț тесе кăтартса панине Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ тĕрĕс тесе шутлаççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çакна палăртаççĕ: Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ декаберĕн 20—21-мĕшĕсенче йышăннă решени хыççăн та райкомсемпе райĕçтăвкомсем çуракине хатĕрленес ĕçе йертсе пырассине чăннипе тытăнман, вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе колхозла массăна çĕклентермен, çуракине образецла хатĕрленсе иртерессишĕн колхозсенче социализмла ăмăртса ĕçлессине организацилемен.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕ, районсенчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсем те МТС директорĕсем çуракине хатĕрленес ĕçре кайа йулас хăрушлăха тата ответлăха халиччен те туйса илмен, çак питĕ те кирлĕ ĕçре хăйсем калама çук тимсĕр тата çаварăнăçусăр пулнине кăтартаççĕ.

Ĕç çине çавăн пек чăтма çук тимсĕр пăхнине пула, Çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксем пысăк та халех тумалли ĕçсене—тракторсене йусассине, горючи турттарассине, вăрлăхсене хыса тасатса хурассине тата суртлă вăрлăх улăштарас ĕçсене пурнăçа кĕртмесĕр йулас хăрушлăх умне кăларса тăратрĕç.

Тракторсене йусамалли плана мĕн пурĕ те 30 процент çеç тултарнă, йусас ĕçĕн пахалăхĕ çителĕксĕр, Шупашкар (директорĕ Щетинин й.), Елĕк (директорĕ Быков й.), Пăрачкав (директорĕ Губин й), Трак (директорĕ Угольков й) тата Канаш (директорĕ Шадрин й.) МТС сем уйрăмах йапăх ĕçлеççĕ.

Йанварĕн 1-мĕшне вăрлăх хывмалли плана 93 процент çеç тултарнă, ку ĕç уйрăмăнах Йĕпреç, Канаш, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Турхан тата Шăмăршă районĕсенче йапăх пулса пыраț. Вăрлăхсене тасатма тата суртсене улăштарма нумайĕш районсенче тытăнман; вăрлăхсене трийер витĕр суртласа кăлармалли плана Улатăр, Патăрйел, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Шăмăршă тата Тăвай районĕсенче 1—5 процент чухлĕ çеç тултарнă, суртлă вăрлăхсене улăштарас ĕçе халĕ те пуçăнман.

Заготзерно (Польанин й.) тата Госсортфонд (Свешников й.) вăрлăхсене тасатас ĕçе чăтма çук йапăх туса пыраççĕ.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн, райкомсемпе райĕçтăвкомсен айăпĕпе чылай МТС-сене (Йĕлчĕк, Çĕрпӳ, Куславкка, Елĕк) тата çĕрĕç пайĕсене (Патăрйел, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай) йертсе пыракан работниксемпе специалиссем тупса çирĕплетсе паман.

Республикăри тата районри хаçатсем „тракторсем йусас ĕç, вăрлăх хатĕрлес тата тасатас ĕç арканса кайнăшăн айăплă çынсене тăрă шыв çине кăлармаççĕ тата çуракине чи лайăххăн хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсенче социализмлă ăмăрту организацилес ĕçре пуçарса пымаççĕ".

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райкомсемпе райĕçтăвкомсене, çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директорĕсене, йалсоветсемпе колхоз правленийĕсене çуракине хатĕрленес ĕçри кăтартнă çитменлĕхсене халех тӳрлетсе çитерме тата çаксене туса иртерме хушаççĕ:

1. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йанварĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене анлăн ăнлантарса памала, колхозниксен пухăвĕсенче, колхоз активĕн сьочĕсенче тата йалхуçалăх работникĕсен канашлăвĕсенче çуракине образецла хатĕрленмĕ май паракан конкретлă мерăсем çинчен сӳтсе-йавса йышăнмала.

Партипе комсомол организацийĕсемпе совет активне, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче усне вуншар тата çĕршер агитаторсене, вулав çурчĕсемпе клубсене, пичетпе радиона тата массăна организацилемелли большевикла ытти майсене пурне те мобилизацилесе, райкомсемпе пуçламĕш парти организацийĕсен çураки ĕçĕсене образецла иртерес кĕрешӳве колхозниксемпе йединоличниксен массисене организацилемеле.

2. Парти организацийĕсен социализмла ăмарту организацилес ĕçе бюрократла пăсма хăтланакансене (сӳлтен схемă пани, стандартлă договорсем туни, массăла ăмăртăва уйрăм рекордсемпе улăштарни т. ыт. те) татăклăн сирсе пырса, колхозсемпе совхозсенче, МТС-семпе районсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чăн-чăн ăмăрту сарса йарса, ăна йертсе пымала.

Феврал уйăхĕн варринче Шупашкарта йалхуçалăхĕн чи малта пыракансен республикăри сьотне пухас. Обкомăн йалхуçалăх пайне, райкомсене тата Çĕрĕç халăх комиссариатне çав сьота ирттерме тĕплĕн хатĕрленме хушас.

Республикăра мухтав хăми тăвас.

3. Çĕрĕç халăх комиссариатне, машинпа трактор станцисене тата машинпа трактор мастерскойĕсене тракторсене тата кăкармалли машинăсене мартăн 1-мĕшчен йусаса пĕтерме хушас. Çакна шута илсе, уйрăм машинпа трактор станцийĕсем валли тракторсене йусамалли плана тултарассин çакăн пек графикне тăвас (график çине пăх).

Серебренников йулташ тата МТС директорĕсем çине ответлăх хурса, Çĕрĕç халăх комиссариатне тракторсене паха йусанине çирĕп тĕрĕслесе пырас ĕçе организацилеме тата паллă машин пайĕсене йусассишĕн уйрăм çынсем ответлă пулмалли йĕрке тума хушас. МТС директорĕсене, туса ирттернĕ ремонта бракланă пулсан, çавăншăн айăплă конкретлă çынсене çирĕп ответ тыттарма хушас.

Çĕрĕç халăх комиссариатне тата парти Обкомĕн йалхуçалăх пайне тракторсене йусас ĕçе хăвăртлатма тата ку тĕлĕшпе техника тĕлĕшĕнчен пулăшу пама Çĕрĕç халăх комиссариатĕнчи работниксенчен тата предприйатисемпе йалхуçалăх шкулĕсенчи инженерла-техникла работниксен представителĕсенчен бригадăсем туса кайа йулса пыракан МТСтанцийĕсене йама хушас.

Çунтармалли йапаласем кӳрсе тăракан организацине (Гутапсбыт, Клоков йулташ) тата Йалхуçалăх снабженине тракторсене йусама кирлĕ запаслă пайсене чи кĕске вăхăтра кӳрсе килме хушас.

Çĕрĕç халăх комиссариатне йанварĕн 15-мĕшчен çунтармалли йапаласем кӳрсе килме лимит уйăрса хурассине пурнăçлама тата, МТС директорĕсене çунтармалли йапаласене февралĕн 15-мĕшчен, çĕнĕрен тунă МТС тăрăх мартăн 15-мĕшчен кирлĕ чухлĕ кӳрсе килме, çавна валли нефтохуçалăхсем, çунтармалли йапаласене тыткаламалли хатĕрсем тата усрамалли вырăнсем хатĕрлеме хушса, кашни МТС валли çунтармалли йапаласем илмелли заданисем тата сруксем палăртма хушас.

4. Чăваш республикĕн условийĕсенче çуракинче лаша туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, çĕрĕç органĕсене тата колхоз правленийĕсене лашасене, вĕсене çуракине мăнтăрăн та лайăххăн илсе тухас майпа, тĕрĕс пăхса усрас ĕçе йĕркелеме хушас.

5. Çĕрĕç халăх комиссариатне тата райĕçтăвкомсене акмалли тырра хатĕрлесе хурас ĕçе Йĕпреç, Вăрнар, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Йетĕрне, Пăрачкав тата Шăмăршă районĕсенче йанварĕн 15-мĕшчен, ытти районсем тăрăх йанварĕн 12-мĕшчен туса пĕтерме хушас. Çак сруксем хушшинче районра вăрлăх фончĕсене туса çитерме кашни колхоз валли уйрăм сруксем палăртса пама хушас.

6. Районсем валли вăрлăхсене тасатса пĕтермелли çакăн пек графиксемпе сруксем тăвас (график çине пăх).

Çак графика çирĕп пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе Çĕрĕç халăх комиссариатне, районсенчи çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директорĕсене, колхоз правленийĕсене пур трийерсемпе вăрлăх тасатмалли ытти машинăсене те талăкĕпех ĕçлеттермеле тума, вăрлăх тасатакан обозсем çӳремелли маршрутсене туса, вĕсене çирĕп тытса пыма, пур колхозсенчи бригадăсенче те вăрлăх тасатакан звеносем уйăрса, вĕсен ĕç нормисене тума хушас. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн, районти çĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăтартнă срокра — йанварĕн 15-мĕш тĕлне колхозсенче хывнă вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслесе пĕтермеле, малашне вара халĕ ĕçлекен контроллĕ вăрлăх станцисен ĕçĕсене йĕркелесе, вăрлăх тасатнине, вĕсен пахалăхпе хуçалăхлă йурăхлăхне тĕрĕсленине çирĕп контроль туса пымала.

7. Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе райĕçтăвкомсене колхозсем хушшинче вăрлăхсем улăштарассине Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти октябĕрĕн 31-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнă виçе таран йанварĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтерме, государствăн суртлă вăрлăх фончĕпе Заготзерно тăрăх февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтерме хушас. Заготзерно—Польанин йулташа, Государствăн суртлă вăрлăх фондне—Свешников йулташа вăрлăха тасатассине васкатма тата васкавлăн улăштарма тытăнма хушас. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн агрономĕсене ĕçе хутшăнтарса, вăрлăх улăштарнă чухне правительствă йышăннă вăрлăх сурчĕсене çеç панине контроль тумала.

8. Çĕрĕç халăх комиссариатне, районти çĕрĕç пайĕсене, колхоз правленисене районти вăрлăх хуçалăхĕсене тата колхозсен вăрлăх участкисене ăкана хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕн пăхма хушас, вĕсене чи лайăх, таса суртлă вăрлăхсем памала.

9. Лашапа ĕçлемелли инвентарсене (плугсем, сейăлкăсем, урапасем, т. ыт. те) йусассине чăннипе тытăнмалине шута илсе, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Обком районти çĕрĕç пайĕсене çак инвентарсене йусама кашни колхоза çирĕп сруксем туса пама хушаççĕ. Çак ĕçе васкатма Вырăнти промышленнăç халăх комиссариачĕн, Ошосдорăн, предприйатисен МТС-н, совхозсен, районти колхоз шкулĕсен вĕренӳлĕ ремонт мастерскойĕсемпе усă курмала, çавăн пекех пулăшу йĕрки тăрăх заводсен куçса çӳрекен мастерскойĕсене организацилемеле.

10. Çĕрĕç халăх комиссариатне—малта пыракан колхоз председателĕсемпе бригадирсене ĕçе хутшăнтарса—уйрăм колхозсен опычĕсене сăнаса çуракинче ĕçе организацилес ыйтусене пăхса тухса, вырăнсене кăтарту пама хушас.

11. ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн йанварĕн 20-мĕшĕ тĕлне Çĕрĕç халăх комиссариачĕн аппаратне çирĕплетме йертсе пыракан работниксен ушкăнне суйласа илсе ĕçе йамала. Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе ПСК(б)П райкомĕсен çак срукра районти çĕрĕç пайĕсемпе МТС-сене йертсе пыракан работниксемпе, специалиссемпе çирĕплетмеле.

12. Республикăрипе районти хаçатсен редакторĕсене çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине куллен тата конкретлă çутатса тăма, колхозсен ăмăртуне организацилес ĕçре хăйсен рольне çĕклеме çуракине хатĕрленес ĕçе аркатакан айăплă çынсене палăртса тăрă шыв çине кăларма хушас.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Ф. Матвейев

ПСК(б)П Обком секретарĕ И Дубов.

Республикăри районсенче вăрлăх суртламалли график-сруксем

РАЙОНСЕМ	Трийер витĕр суртласа кăлармали план (центнерпа)	График тăрăх пана заданисем							
		10/I	15/I	20/I	25/I	30/I	5/II	10/II	15/II
Улатăр	13618	3750	7500	11200	13618	—	—	—	—
Елĕк	25937	3450	6900	10350	13800	17250	20700	24150	25937
Патăрйел	22750	3450	6900	10350	13800	17250	20700	22750	—
Вăрнар	24719	4050	8100	12150	16200	20250	24719	—	—
Йĕпреç	15423	1928	3856	5784	7712	9640	11568	13496	15423
Ишлей	21117	2637	5274	7911	10548	13185	15822	18459	21117
Канаш	18510	2313	4626	6939	9252	11565	13878	16191	18510
Куславкка	20783	5100	10200	15300	20400	20783	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай	17338	4350	8700	13050	17338	—	—	—	—
Кувакина	16515	2064	4128	6192	8256	10320	12384	14448	16515
Сĕнтĕрвăрри	17376	4050	8100	12150	16200	17376	—	—	—
Пăрачкав	19541	2443	4886	7329	9772	12215	14658	17101	19541
Турхан	10920	1200	2400	3600	4800	6000	7200	8400	10420
Тутаркас	26195	3274	6548	9832	13106	16380	19654	22928	26195
Трак	22393	2800	5600	8400	11200	14000	16800	19600	22393
Вăрмар	27637	4500	9000	13500	1800	22500	27000	27637	—
Çĕрпӳ	26768	3450	6900	10350	13800	17250	20750	24200	26768
Шупашкар	18883	2850	4500	6750	9000	11250	13500	13700	18883
Шăмăршă	12480	2250	4500	6750	9000	11250	12480	—	—
Шăхасан	24271	3034	6068	9102	12136	15170	18204	21238	24271
Шăнкăртам	12044	2250	4500	6750	9000	12049	—	—	—
Çĕмĕрле	12062	1650	2300	4950	6600	8250	9900	11550	12062
Йетĕрне	20343	2400	4200	7250	7600	12000	14400	12000	20343
Тăвай	27901	3488	6976	10464	13952	17440	20928	24416	27901
Йĕлчĕк	18864	2357	4714	7071	9428	11785	14137	16494	18864

Чăваш АССР МТС-сенче тракторсем йусама палăртнă кашни вунăкунлăхри план-график

1938 çулхи 1-мĕш квартăл

МТС йачĕсем	1938 çулхи 1-мĕш квартăлта йусама палăртнă план			Пĕрремĕш вунăкунлăхра		Иккĕмĕш вунăкунлăхра		Виççĕмĕш вунăкунлăхра		Тăватăмĕш вунăкунлăхра		Пилĕкĕмĕш вунăкунлăхра		Ултăмĕш вунăкунлăхра		
	СТЗ	ЧТЗ	У—2	СТЗ	ЧТЗ	СТЗ	ЧТЗ	СТЗ	ЧТЗ	СТЗ	ЧТЗ	СТЗ	ЧТЗ	СТЗ	ЧТЗ	
Улатăр	15	4	2	4	1	4	1	4	1	3	1—ЧТЗ 2—У—2	—	—	—	—	—
Елĕк	36	2	—	6	—	6	—	6	1	6	1	6	—	6	—	—
Патăрйел	38	4	—	6	—	6	1	7	1	7	1	6	1	6	—	—
Вăрнар	28	3	—	6	—	6	1	6	1	6	1	4	—	—	—	—
Йĕпреç	19	3	—	6	—	5	1	5	1	3	1	—	—	—	—	—
Ишлей	25	—	—	7	—	7	1	7	—	7	—	7	—	—	—	—
Канаш	15	5	—	—	1	—	1	5	1	5	1	5	1	—	—	—
Куславкка	20	—	—	5	—	5	—	5	—	5	—	5	—	—	—	—
Кувакина	36	4	2	5	—	6	1	6	1	6	1	6	1	6	—	2
Пăрачкав	48	6	2	8	1	9	1	9	1	9	1	9	1	4	1	2
Тутаркас	41	—	—	7	—	7	—	7	—	7	—	7	—	6	—	—
Трак	34	—	3	5	—	6	—	6	—	6	—	6	—	4	—	3
Вăрмар	36	4	3	6	—	6	1	6	1	6	1	6	1	6	—	3
Çĕрпӳ	39	3	—	6	—	7	1	7	1	7	1	7	—	5	—	—
Шупашкар	40	—	—	6	—	7	—	7	—	7	—	7	—	6	—	—
Шăхасан	21	2	—	5	—	5	1	5	1	6	—	—	—	—	—	—
Йĕлчĕк	45	3	—	7	—	7	1	7	1	7	1	9	—	8	—	—
Тăвай	22	2	—	6	—	6	—	5	—	5	1	—	1	—	—	—
ЧАССР тăрăх	568	45	12	103	3	105	12	110	12	108	11 2—У—2	85	6	57	1	10

Условисем пĕрпек, ĕççем расна

Трак районĕнчи Тĕрер йалсовет председателĕ А. Алексейев йалсоветне кĕрекен колхозсенче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленине сӳтсе-йавассине анлăн сарса йачĕ.

Постановленине тĕплĕн сӳтсе йавнă хыççăн, „Правда" колхозра халиччен йулса пынă ĕççене вăйлатса йарса, кăçалхи çул вăтамран пĕр гектартан 150 пăт тĕштырă туса илме пулчĕç. „Правда" колхоз çуракине хатĕрленессипе „Пчелкино" колхоза социализмла ăмăртăва чĕнчĕ.

Пайанхи куна „Правда" колхоз пин лав тислĕк уйа кăларса купаласа лартрĕ. Халĕ фекали, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассипе уйрăм звено ĕçлет. Колхоз 48 центнер минерал çăвăхĕ кӳрсе килнĕ те ĕнтĕ. Вăрлăхсене суртлассине те лайăх организациленĕ. Халĕ вăрлăх суртланă çĕрте комсомолецсемпе вата колхозниксем хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех йалсоветне кĕрекен „Пчелкино", „Буйга" колхозсем çуракине хатĕрленессипе нимĕн те туман. Йалхуçалăх машинисене кĕркунне ăçта лартнă, çавăнтах лараççĕ. Колхоз председателĕпе бригадирсем çуракине хатĕрленессине аса та илмеççĕ.

К. Михайлов.

Йур тытаççĕ

Шĕмшешри „Мотор" колхозра (Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) çуракине хатĕрленнĕ май çак кунсенче уйра йур тытас ĕçе тытăнчĕç. Пĕрремĕш бригадăра 45 гектар, 2-мĕш бригадăра 30 гектар, 3 мĕш бригадăра 46 гектар тата 4-мĕш бригадăра 50 гектар çинче йур тытса хăвараççĕ.

А. А.

Чăваш Сорăмĕнчи „Серп и молот" колхозра (Елĕк р-нĕ) декабĕрĕн 30-мĕшĕнче пурĕ 79 гектар çинче йур тытрĕç. Колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçре пĕр пĕрне пе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. Терентйев.

Мăн Хăмаркари „Авбат" колхозра (Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) çак кунсенче кашни бригада 45-шер гектар çинче йур тытрĕ.

М. Семенов

Шăхасан районĕнчи колхозсем илнĕ обйазателствăсем

Шăхасан районĕнче колхозсенчи уйхир бригадирĕсемпе опытниксен, стахановецсемпе ударниксен сьочĕ пулса иртрĕ. Сьот 1937 çулхи йалхуçалăх çулĕн итогĕпе 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçĕн задачисем çинчен сӳтсе-йаврĕ.

1937 çулта Шăхасан районĕнчи колхозсем вăтамран пĕр гектар çинче 100 пăтран кайа мар тырă туса илчĕç. Лайăх тăрăшса ĕçлекен Киров йачĕпе тăракан, „Правда", „Çĕнĕ пурнăç" колхозсем вăтам шутпа гектартан 120—150 пăт тĕштырă, 3.200 пăт выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Уйрăм бригадăсенчи стахановла звеносенче 260—280-шер пăт тĕштырă илнĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе тата агротехникăна тĕрĕс пурнăçласа пынипе лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Атнаш колхозĕнчи Степанова бригадинче 15 çынтан стахановла звено тунă. Ку звено вăйлă тырпул илессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçленипе, гектартан вăтам шутпа 250 пăт ыраш илнĕ.

Колхозниксем пысăк тупăш илсе, пуйан та культурлă пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

— Епĕ ĕлĕк питĕ чухăн пурнăçпа пурăннă. Кил-йыша тăрантарса усрас тесе, 8 çул хушши, тарçăра та çӳрерĕм. Анчах çавах та хамăн çемйере пурăнакансене тăрантармалăх ĕçлесе илеймен. Çĕр те тăвайкки çамкисенче çеç пулнă. Епĕ гектар çĕр çинчен 40—50 пăтран ытла тырă илсе курман. Çĕре çемçетме тислĕк тума выльăх-чĕрлĕх те пулман. Мана колхозла пурнăç çеç пуйан пурнăçпа пурăнакан турĕ. Халĕ манăн ĕне, сурăхсем, сыснасем тата ытти вак выльăхсем те çителĕклĕ. Иртнĕ çулта хам килтен 50 лав тислĕк колхоза патăм, кăçал та 50 лавран кайа мар колхоз хирне кăларатăп. Епĕ халь пуйан та тулăх пурнăçпа пурăнатăп. Кăçал 336 пăт тĕштырă ĕçлесе илтĕм. Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатăп,—тет Алоскăр колхозĕнчи вата колхозник-стахановец Семйонов Петр.

Сьота килнĕ колхозниксем-стахановецсем районра çитес çуракине начар хатĕрленнине шута илсе, çитменлĕхсене халех пĕтерессишĕн татăклă обйазателства илчĕç.

1938 çулта вăтамран пĕр гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă, çĕрулми—200 центнертан кайа мар, сӳс-кантăр 7 центнер илме палăртса хăварчĕ. Йанварпе феврал уйăхĕнче районĕпе 160 пин лав тислĕк, 30 пин тоннă торф, 800 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 4800 центнер фекали, 4800 центнер кĕл, 7500 центнер йушкăн пухса хатĕрлемеле, йалхуçалăх машинисене йусаса çитермеле, вăрлăхсене суртламала, суртлă мар вăрлăхсене улăштармала. Çуракинче вăрлăхсене 100 проценчĕпех çуса тасатмала, 50 процентне йаровизацилесе акмала, сейăлкăсемпе çителĕклĕ таран усă курмала, тесе пĕр çасăпах йышăнчĕç.

Шăхасан районĕ çуракине ăнăçлăн та паха тĕслĕхсемпе ирттерес тĕлĕшпе Вăрнар районне социализмла ăмăртăва чĕнчĕ.

С. Соколов.

Çуракине хатĕрленес ĕç халь те начар

ВĂРНАР (хамăр корр.). Районра кăçалхи çул вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕç саралсах пыраț. Нумай колхозсем йанвар уйăхне кĕнĕрен лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Акă „Çуттала" колхозра кашни бригада 500-шер лав тислĕк уйа кăларнă, фекали пухма тытăннă. Калинин йачĕпе тăракан колхоз çак йулашки кунсем хушшинче 850 лав тислĕк, 500 лав торф уйа кăларнă. 210 центнер вăрлăх тасатса хатĕрленĕ. „Строитель" колхоз 2000 лав торф кăларса турттарчĕ.

Çав хушăрах Чалăм Кăкшăм колхозĕ пайанхи куна çитсе те çуракине хатĕрлеме тытăнман. Вăрлăхсене пĕр пĕрчĕ те тасатман. Суртлă вăрлăхсемпе улăштарасси çинчен шутласа та пăхмаççĕ. Колхозăн пăрçа, йасмăк, тулă вăрлăхĕсене суртлă вăрлăхсемпе улăштарса акмала. Пăрçа вăрлăхне „Трактор" колхозпа, йасмăк вăрлăхне „Хĕрлĕ кавалерис" колхозпа улăштарма хушнă. Анчах вĕсен вăл вăрлăхсем хăйсене те çитмеççĕ.

Тырпул тухăçне хăпартас тĕлĕшпе агротехника кăтартувĕ тăрăх район пана плана тултарма колхозăн çак ĕçсене тумала: тислĕк 8975 лав, вăл шутран хĕлле 3977 лав, торф 15000 лав уйа кăлармала, йушкăн 120 лав кăларса турттармала. 125 гектар çинче йур тытмала. Кĕл 100 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 50 центнер пухса хатĕрлемеле. Колхоз пайанхи куна çитсе ăсăннă ĕçсенчен пĕрне те тума тытăнман. Йалхуçалăх машинисем пĕри те хатĕр мар. Колхоз председателĕ Иванов кăçалхи çул пысăк тупăшлă тырпул туса илесси çинчен шутласа та пăхмаст. Улангай.

Çамрăк маçтăр

Малти шкултан вĕренсе тухсан, Гриша Васильев Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи фабрик-завод шкулне вĕренме кĕнĕ. Кичемĕн туйăннă малтанхи вăхăтра Гришăна. Вăл ачасемпе выљăман, сăмаха ытлашши ваклама та йуратман.

Пĕрре ачасем общежитине пухăнса ларсан, малалахи пурнăç çинчен каласма пуçланă. Кашнийех хăйĕн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене кала-кала кăтартнă.

— Манăн љотчик пулас килет. Йепле аван вĕсен пурнăççĕ! Йаланах сывлăш çинче йарăнса çӳреççĕ,—тенĕ Миша.

Хăшĕсем тата инженер, строител, техникисем—завод директорĕ пулма шутлани çинчен каласа панă.

Гриша шимĕн те пăрламан. „Хăм та пĕлместĕп. Ку ыйтупа йатарласах лармала. Шутламасăр ăçтан калатăн. Кайран каласа парăп“,—тенĕ вăл.

Гриша урокра та шăпах ларнă. Дисциплинă унăн отлично пулнă. Шкул директорĕ йаланах аташакан ачасене Гришă пек пулма чĕннĕ. Гриша Васильев ытти предметсемпе те начар отметкăсем илмен. Шкулĕпе шутласан, вĕренӳ тĕлĕшпе малта пыракансен ретĕнче тăнă.

* * *

1937 çул. Ку çул Гриша Васильевшăн уйрăмăнах пысăк çул пулса тăрат. Вăл çак çул маçтăр йатне илчĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕнче ССР Союзĕн Аслă Советне суйлани те Гриша Васильевшăн нихçан астăн кайми паллă кун пулса тăрат.

Гриша—халĕ маçтăр. 1933 çулта фабрик-завод шкулĕнчен вĕренсе тухсан, 3 çул хушши комбинатри столљарно-мебељнăй цехра ĕçленĕ. Çав виçĕ çул хушшинче цехра вăл ĕçлесе курман станок та пулман. Чи ответлă вырăнта, „шипорез“ станок çинче те ĕçленĕ.

1936 çулта, цех начаљникĕ Гришăна техприйомщика куçарнă. Ĕç çăмăлах пулман. Пĕтĕм цеха продукци тума кирлĕ материалсем пиншер штукăн Гриша алли витĕр тухнă. Вăл кашни пукан, сĕтел, шкаф таврашĕсене пахалăх тĕлĕшĕнчен пăхса йышăннă. Çав вăхăтрах касхине рабфака вĕренме çӳренĕ.

Унăн ĕçри хастарлăхĕпе пултарулăхĕ цехри рабочисене хавхалантарнă. Цех начаљникĕ Йегоров та ăна ырлана. Гриша Васильевăн ырă примерĕсем çинчен пухусенче каласа пана. Ырă ĕçшĕн комбинатра ĕçленĕ хушăра Гриша 3—4 хут преми илнĕ.

1937 çулта октябрĕн 7-мĕшĕнче, Саратов хулинчи мебељнăй ĕçсенче ĕçлемели маçтăрсен 3 уйăхлăх курсĕнчен вĕренсе килнĕ хыççăн, Гриша маçтăрта ĕçлеме пуçларĕ. Халĕ ĕнтĕ унтанпа пĕтĕмпе те 3 уйăх çеç иртрĕ. Анчах, Гриша хăйĕн вăйне кăтартрĕ. Вăл йертсе пыракан сменă комбинатра малти вырăна тухрĕ. Кĕскен каласан, çакна çеç палăртмала: Гриша Васильев йертсе пыракан столљарно-мебељнăй цехри сменă нойабĕр уйăхĕнче те ыттисенчен мала тухрĕ. Декабĕрте те уйăхри плана 130 процент ытла тултарчĕ.

Васильев хăйĕн сменинчи рабочисем хушшинче пысăк авторитетпа усă курат. Ăна пурте йуратаççĕ. Вăл пурнипе те ăшшăн, йулташла калаçат. Пĕлменнисене вĕрентет, йулакансене пулăшат. Кашни рабочинех вăл стахановла ĕçлеттерессишĕн тăрăшат, условисем туса парат. Çавăнпа та унăн сменинче комбинатри чи паллă рекордиссенчен пĕри Вера Касйанова ĕçлет. Вера Касйанова декабĕр уйăхĕнче сменăри нормăна 418 процент тултарса, нихçан пулман рекорд турĕ. Халĕ Гриша Васильев пĕтĕм сменăна Вера Касйанова опыцĕпе ĕçлесси çине куçарассишĕн тăрăшат. Вера Касйанова та çак çулта нормăна 500 процент таран тултарса ĕçлеме обйазателствă илчĕ.

Васильев йертсе пыракан сменăра пĕтĕмпе 44 çын. Пурте вĕсем плана тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 65 процентĕ стахановецсемпе ударниксем шутланаççĕ.

Васильев—стахановец, маçтăр, комсомолец. Пĕр вăхăтра цехри комсомол организацин секретарĕ пулса ĕçлерĕ. Рабочисем хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕçе йĕркелĕ туса пырат. Кашнă вăхăтра рабочисене хаçатсем вулаçа парат, ĕç хыççăн производствăлă канашлусем иртерет. Ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организациленĕ. Кашни ĕçех çирĕппĕн шута илсе пыраççĕ.

Кăçалхи çул Гриша Васильев сменинче ĕçлекенсем татах та пысăк çитĕнӳсем тума обйазателствă илчĕç. Ăна пурнăçламă кашни рабочи пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлет.

— Ку çулта та малти вырăнтах пулатăп. Рабочисем шантарчĕç, çавăнпа уççăнах калатăп: çĕнтерӳ пирĕнтех пулат,—тет Васильев йулташ.

Кăçал маçтăрта ĕçлесен, килес çул Гриша аслă шкула вĕренме кайма шутлат.

Хар. Лисин.

Пĕр цехри стахановецсем

Канашри вагонсем йусакан заводри Иван Гурйевпа Александр Котљаров пĕр цехра, пĕр станок çинче ĕçлеççĕ. Вĕсем, вăтам пӳлĕ, паттăр çамрăксем. Иванпа Александр пĕр станок çинче ĕçлеме пуçлани иккĕмĕш çул ĕнтĕ. Завода кĕрсенех, Иван—ултă уйăх хушши грузчикра, Александр—çĕрĕçĕнче, унтан слесăр пулса ĕçленĕ.

Заводри ĕç колхозран пынă çамрăксемшĕн малтанлăха йăвăр пек пулнă. Вĕсем, грузчикран механически цеха куçса, унта станок çинче хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕренеççĕ.

Халĕ акă вĕсем иккĕшĕ те квалификацилĕ станочниксем пулнă. Котљаров—болтă ваљљи гайкăсем тунă çĕрте, Гурйев—унăн молотобоец-кузнец пулса ĕçлет. Ĕçĕн техникине алла çавăрса илчĕç. Планпа кашни кун 305 гайкă тумала пулсан, вĕсем декабĕр уйăхĕнче 700—900 гайкă таран туса кăларчĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсен ĕçукçийĕ те ӳсрĕ. Уйăхра Котљаров—1119 тенкĕ, Гурйев 750 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Механически цехра (начаљник Куликов) стахановецсем сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕн пуçламĕшне—1938 çулăн малтанхи кунне ĕçре халиччен пулман пысăк çитĕнӳсем тунипе палăртрĕç. Гурйевпа Котљаров пĕр кунхи нормăсене 600 процент тултарса, çĕнĕ рекорд турĕç. Вĕсем, çак кун кашнийех 41 тенкĕ те 17 пус ĕçлесе илнĕ. Електросварщик Хорьков та аван ĕçлесе пырат. Вăл декабĕрте 1200 тенкĕ ĕçлесе илчĕ. Халĕ Хорьков йулташ кашни кунхи нормăна 700—800 процент тултарса, кунне 46 т. 16 пус ĕçлесе илет. Çавăн пекех йулашки вăхăтра Чуксейев, Шашкин йулташсем те плана ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

Стахановецсен мухтавлă ĕçĕпе пĕтĕм цех савăнат. Стахановецсем те уншăн савăнаççĕ.

— Манăн стахановла ĕçĕн ӳсĕмĕ, вăл—ĕçре çирĕп дисциплинă пулнипе, ĕçе йуратнипе пулса пычĕ. Мана шанса панă ĕçе епĕ вăхăтра пурнăçлатăп тесе, хам çине пысăк шанчăк илетĕп. Малала татах та çĕнĕ рекордсемшĕн кĕрешетĕп,—тет Гурйев йулташ.

Н. Й.

Промысла ертелĕн çитĕнӳвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Хуракассинчи „Ширпотреб“ промертел çĕнĕ çула 1937 çулхи плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илнĕ. Уйрăм бригадăсене илсен, çулталăк планне: сĕтел-пукан тата партăсем тăвакан бригадă 120 процент, вăрман касса кљопкă тăвакан бригадă—150 процент, пичкесем ваљљи пропкă тăвассине—173 процент тултарнă.

Пропкă тăвакансенчен Йемелйанов Филиппа Димитрийев Михаил пĕр кун хушшинче 1000 пропкă туса хатĕрлес вырăнне, 2000—2300-шер пропкă тăваççĕ. Çакăн пекех столљарсенчен: Љэвуков Николай, Тормидонов Владимир вăрман касса катка-пичке тума кљопкă хатĕрлекенсем: Мољаков Иван, Толстов Йегор, Купцов Павел, Макаров Иван—кулленхи ĕç нормисене 150—200 процентшар тултарса пыма пуçларĕç.

Музык инструменчĕсем (балалайкă, гитара, мандолинă, скрипкă, хуткупăс) туса хатĕрлеме панă плана та ытлашшипех тултарнă. Музык инструменчĕсем тăвас ĕçре Кудрйашов Тихонпа Йакимов Павел паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ. Вĕсем балалайкăпа мандолинă тăвассине 120 процент тултарнă.

Малашне, плана тултарас ĕçре чăрмавсем ан пулччăр тесе, рабочисем хушшинче пропкă, кљопкă туса хатĕрлес ĕçе вĕренмели кружоксем уçнă. Кунпа пĕрлех промертел клубĕнче ĕçсене кирлĕ вырăна лартрĕç. Клубра халь кашни ернерех „Ударник“ йатлă стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Стена хаçат редакторĕ Афанасйев тăрăшса ĕçлет.

Ертел членĕсен канун е културлă иртерес тĕлĕшпе клуба радио кӳртнĕ. 1938 çулшăн 400 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журналсем çыраниа илнĕ. Клубра шашкă-шахмăт, патефон та пур. Тата ертел çумĕнче 32 çынран хор кружокĕ организациленĕ. Хор кăçал 2 хутчен чаплă концерт пачĕ.

Ĕç укçи ӳссех пырат

СĔНТĔРВĂРРИ (хамăр корр.). Деткомиссин катка-пичке заводĕнче сатăрла ĕçсен йулашкийĕсене тĕпрен пĕтерсе пынă май, рабочисем хушшинче социалисăмла ăмăртса стахановла ĕçлесси вăйланчĕ. Стахановецсем 38 çынна çитрĕç. Стахановла йухăм сарăлса пынипе пĕрлех рабочисен ĕç укçи те ӳссех пычĕ.

Романовпа Копылов рабочисен октябĕр уйăхĕнчен плана 200—250 процентшар тултарса пырса, 1020-шер тенкĕ ĕç укçи илсе пыма пуçларĕç.

— „Епĕр Деткомиссин Çĕмĕрлери катка-пичке завочĕпе ăмăртса ĕçлесе, 1937 çулхи плана лайăх пурнăçланă. Ăмăртса ĕçлессине малала тăсатпăр. 1938 çулта та Деткомиссин Çĕмĕрлери завочĕпе ăмăртса ĕçлесе, çĕнĕ çитĕнӳ тума пулатпăр“ тесе хавасланса ĕçлеççĕ.

В. В.

Н. А. Некрасов сăввисем

Манăçа йулнă йал

I

Ват карчăк Ненилă Влас бурмистăртан
Çуртйĕр йусамашкăн ыйтнă кăшт вăрман.
—Çук вăрман. ан та кĕт—пулмĕ!—тенĕ
леш.

Карчăк шухăшланă: „Пулĕ пĕтĕмпех
Ак улпут килсессĕн, пӳртĕн йапăхне
Курĕ те,—памашкăн хупĕ вăрманне“.

II

Кӳршĕри темле çын; ĕмĕтсĕр пулса,
Темĕнле улталă ирсĕр мел тупса,
Хресченсенне илнĕ чи лайăх çĕрне.
„Ак улпут килсессĕн çĕр виçевçине
Лекĕ!—шухăшланă хресченсем пĕрле,—
Вăл сăмах çеç калĕ—куçĕ çĕр пире“.

III

Ирĕкри сухаçă савнă Настаçа
Нимĕç, аслă пуçлăх, пулнĕ хĕр сулне.
Настаç ӳкĕтленĕ: „Тăхтар, Йакăнат,
Ак улпут килсессĕн пирĕн ĕç ăнат“.
Ватти те, вĕтти те,—ĕç чĕрре кĕрсен,—
Харăссăн каланă: „Ак, улпут килсен!..“

IV

Ненилă та вилнĕ; йут çĕр çийĕнче
Ирсĕр кӳршĕн пулнă тырă ӳсĕлсе;
Ĕлĕкхи пур каччă сухалпа çӳрет,
Ирĕкри сухаçă салтака лекет,
Туй çинчен Настаç та текех тĕлленмест...
Улпут халь те çук-ха!.. вăл çаплах килмест!

V

Кĕтсе ывăнсассăн пĕррехчен çапла
Çул çинче курнайнă улт лашалă лав:
Йуман тупăк ларнă урапа çинче,
Тупăкра улпут—мĕн; çĕнни—хыçĕнче.
Ваттине пытарнă, çĕнни, куç шăлса,
Питĕре вĕçтернĕ, лав çине ларса.

Н. Йевстафйев куçарнă.

Вырмасăр йулнă ана

Кĕрхи çапталăк. Хур-кайăк ăсанчĕ

Çаралчĕ вăрман, хирсем те пушанчĕç,
Пĕр ана çеç ак выртат тăсăлса.

Хурлăхлă шухăш пуçа тултарса.
Пучахĕсем пĕр-пĕрне каласçĕ пек
шăппăн:

„Питĕ кичем итлеме сив çиле,
Питĕ кичем çĕр çумнех авăнма,

Пĕрчĕсене тусанпа варлама.
Касçеренех ĕмĕтсĕр кайăксем

Пире муталасçĕ, çиессĕ вĕсем,
Куйан та тантат, тăвăл çĕмĕрет...

Ăçта-ши сухаçă? Мĕне-ха кĕтет?
Ыттисенчен йапăхрахи мĕн епĕр?

Йе писмен, йе тулман пирĕн пĕрчĕмĕр?
Çук. Ыттисенчен начар мар епĕр.

Пĕрчĕсемĕр çитĕнпĕ, тулнă пучах.
Кĕркуннехи çил хурри пулма мар тăр
Акнă пире, çитĕнтернĕ, пултарнă“.
Çил вĕсене хурлăхлăн çапла калат:

— Сирĕн сухаçăн вăй çук ĕнтĕ, тет.
Пĕлнĕ мĕнма акнине вăл пит лайăх,

Анчах ун вăй çитеймĕн пуçтармалăх
Йывăр ăна—вăл çимест те ĕçмест.

Ун чĕрине вил ăмапĕ ĕмет.
Çакă çĕре сухаланă алли унăн

Хăрнă типсе, пуçă йеврĕлĕ усăннă.
Суха çине тайанса пĕр пĕччен

Касăпа утнă сухаçă çинчен
Пит хурлăхлăн йурлакан сас сухалнă.
Ун куçĕсем тĕксĕмленнĕ, путăшнă.

Ку сăвва поет 1854 çулта çырнă. Вулакансем сăвăра пĕр сухаçа çеç мар, патша пусмăрĕнче асапланакан мĕн пур вырăс халăхне кăтартнă тесе йышăннă.

П. Ламанас куçарнă.

Иван Малгай

ПОЕТ

Хĕнхур та асап аслă Руç çийĕнче
Хĕснĕ çынна çĕр айне кĕриччен.
Телей çутине пусмăрти çынсенчен
Усранă тем чул ĕмĕрсем пытарса.
Ĕçхалăх йатне çуралман чечексем.
Туллин йешĕрсе çуркунне те килмен.
Çыран хĕррипе усă саслăн сиксе,
Йухан çăл шывсем кăтартман илемне.
Хайар, усал çил ахăрса талкишпе,
Ĕç кайăкне вăй паман йурлама.
Ăшран шăранса тухакан кĕввипе
Ун май та килмен ун чухне ыр пулма.
Чипер ӳсекен пахчари йăвăçа
Аçа пĕр çапса çунтарса йанă пек,
Пĕтернĕ ун чух темĕн чул сăвăçа
Хĕнхур хăйĕн йăвăр, тискер аллипе.
Тискер тапхăрта ĕс çуралнă, Некрасов,
Çуралнă та ӳснĕ тискер тапхăрта.
Йурланă çапах ĕççынне хăтарасшăн
Асап çунатти айĕнчен хăвăртрах.
Нумай сăвăсем чĕререн çунса çырнă,
Хресчен пурнăçне хĕрхенсе чунупа.
Куççуљ йухтарса ывăнмасăр йурланă
Патша йĕркине ылханан сассупа.
Иртрĕ вăл ĕмĕр. Сан тăрасчĕ пайан,
Утмăл çул куç хупса выртнă хыççăн.
Куратăн ес,—пурнăç камшăн аван,
Кам йурри шăранат кунта уççăн.
Пайан кун та есĕ, поет-демократ,
Хăвна мухтавпа асилен вăхăтра,
Куратăн телейлĕн сывлан çĕршыва,
Куратăн телейлĕн ӳсен ăрува.
Пайан сан умна тухас çук хресченсем
Имшерĕн те нишлĕн, хăйусăр утса.
Çĕр те çитмĕл мĕлйунăн пурнаççĕ вĕсем,
Пуйан пурнăçпа колхозра савăнса.
Кунта савнă, сават ĕмĕртен ĕмĕре
Ĕçхалăхĕ хăйĕн йурлан сăвăçне.
Ун йурри-кĕввисем йаланах чĕрере
Шăранса хăпартаç вăй-халпа кăмăлне.
Иртейрĕç кунсем: Сан тăрасчĕ пайан,
Утмăл çул куç хупса выртнă хыççăн,
Ес куратăн: Руçра пурнăç камшăн аван,
Кам йурри шăранат кунта уççăн.
Епир ал тытса ним суймасăр сана—
Калатпăр: Пайан пирĕн пурнăç аван.
Пирĕн йурă йанрат, пирĕн чун савăнат,
Пирĕнпе хаклă Сталин йалан.

Вулав çурчĕсенче

СĔНТĔРВĂРРИ. ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе иртерес çĕрте вулав çурчĕсем пысăк та паха ĕçсем турĕç. Суйлав умĕнхи кунсенче вулав çурт пуçлăхĕсем агитаторсем пулса ĕçлерĕç, хăйсен авторитетне тата та çӳлерех çĕклерĕç.

Магаç йалсоветĕнчи вулав çурт пуçлăхĕ Гордейев вулав çуртне пухăнакансене ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕн политикла итогĕсем çинчен, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен, Ленин—Сталин партийĕн çĕнтерĕвĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса парат. Гордейев, Сталин йулташăн Сталинский округри суйлавçăсен пухувĕнче каланă сăмахĕ тăрăх, 2 хутчен политкалаçу туса иртернĕ. Çавăн пекех вăл çуракине хатĕрленес ĕçĕн задачисем çинчен, тĕн—ĕçхалăх тăшманĕ пулни çинчен, тĕнчери лару-тăрусем çинчен вуласа, ăнлантарса парат.

Хуракассинчи вулав çурт пуçлăхĕ Михайлов йулташ та массăлă ăнлантарулă ĕçе анлăн туса пырат. Вулав çурчĕнче çĕнĕ кĕнекесен шутне ӳстерессшĕн тăрăшат. Иртнĕ çул кĕнекесем сахал пулнă, халĕ çĕнĕрен 508 кĕнеке илнĕ. Вулав çурт çумĕнче 45 çынран организациленĕ хор кружокĕ ĕçлет. Хора Патрик йулташ йертсе пырат. Колхозниксене хор иртнĕ уйăхра оборонă йуррисемпе халăх йуррисене 6 хутчен йурласа панă. Кунсăр пуçне, вулав çурчĕ çумĕнче драмкружок ĕçлет. Драмкружокра пурĕ 17 çын, декабĕр уйăхĕнче 2 спектакљ лартнă. Кунтах 12 çынран струнлă оркестр организациленĕ, вăл иртнĕ уйăхра 4 концерт туса иртерчĕ.

Йуртакассинчи вулав çурчĕ ваљљи (вулав çурт пуçлăхĕ Трофимов) 1938 çулшăн хаçат-журнал çителĕклĕ çыраннă. Кĕнекесем çителĕклĕ туйаннă, вĕсене вулакансен шучĕ пысăк. Вулав çурчĕ çумĕнче 8 çынран струнлă оркестр организациленĕ, оркестр аван ĕçлет. Пупсен праçникĕ—раштав умĕн йалти учителсем тĕне хирĕçле лекцисем туса панă.

Шуркассинчи вулав çуртĕнче кăçал радиоприйомник лартрĕç. Хор, драмă кружокĕсем, струнлă оркестр ĕçлет. Вулав çурт пуçлăхĕ Козин йулташ „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра тухнă „Турă служителĕсен контрреволюцилĕ ĕçĕсем“ йатлă статйана вуласа ăнлантарат. Ку статйана колхозниксемпе колхозницăсем питех те интересленсе итлеççĕ.

Акшикри колхоз клубĕнче те массăлă ăнлавтарулă ĕçе аван йĕркеленĕ.

Клуб пуçлăхĕ Виноградов колхозниксене хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене куллен вуласа, ăнлантарса парат. Клуб илемлĕ. Унта икĕ ретлĕ хуткупăс, шашкă шахмăт, домино пур. 1938 çулшăн 150 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журналсем çырăнса илнĕ.

Çак хушăрах йапăх ĕçлекен вулав çурчĕсем те пур-ха. Хăшпĕр йалсовечĕсенче вулав çурчĕсен ĕçĕсене йалсоветра ĕçлекенсем хакламаççĕ. Водолейево йалсоветĕнче вулав çурчĕ хут çинче кăна шутланат. 1938 çулшăн вăл пĕр екземпљар „Красная Чувашия“ хаçат çырăнса илнисĕр пуçне, урăх нимĕнле литература та çырăнман. Çĕнĕ кĕнекесем çукпа пĕрех. Вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та ĕçлемест.

Аслă Ăстакасси вулав çурчĕ ваљљи йалсовет 2200 тенкĕ укçа уйăрнă пулнă. Çак укçана йалсоветра ĕçлекенсем вулав çуртне пĕр пус та паман, 300 тенкине председател хăй кăсйине чикнĕ, ытти 451 тенкине урăх çĕре салатнă.

Районти çутĕçпайĕнчи инструктор Шљапин вырăнсене тухса çӳресе, вулав çурчĕн ĕçĕсене йĕркелеме тăрăшмаст. Вăл „пирĕн районра вулав çурчĕсем суйлав кунĕсенче вăйлăн ĕçленĕ, халь мĕнле ĕçленине пĕлместĕп“, тет.

Вулав çурчĕсен массăлă-ăнлантарулă ĕçе йаланах туса пымала. Вулав çурчĕсемпе ĕçлессине тивĕçлĕ вырăна лартмала.

В. Васильев.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Лини хывасси мĕнле пырат

Йанварĕн 9-мĕшĕ тĕлне 28 километр тăршшĕ лини хывнă. Ку тарана çити лини хывассине ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулни пысăк чăрмав кӳнĕ. Темиçе çĕр çын ĕçлес вырăнне, 80—90 çын çеç ĕçленĕ.

Халĕ лини хывнă çĕрте Çулйĕр халăх Комиссариачĕн 150 çынтан тăракан бригади ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл бригадă малтан строителствăра пулнă бригадăпа пĕрле ĕçлет. Строителствă руководителĕсен бригадăри тата пĕтĕм участкăри ĕçе тĕрĕс организацилесси çине хытăрах çавăрăнса пăхмала. Бригадă ваљљи материалсем, ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ тăратмала. Унсăрăн бригадă ăнăçлăн ĕçлеме пултараймст.

Бригадă ĕçлеме тытăнни районри организацисене строителствăна ĕç вăйĕ парса пулăшассинчен пăрахма ирĕк памаст. Бригадăна ăнăçлăн ĕçлеме ĕç вăйĕ ытларах кирлĕ. Вăл ĕç вăйне Çĕрпӳ, Ишлей, Шупашкар районĕсем памала.

160 процентран кайа мар

Манăн бригадăра пĕтĕмпе 16 çын. Вĕсенчен 11-ĕшĕ комсомолецсем. Пурте вĕсем хастарлăн ĕçлеççĕ. Колбасов, Кудрйашов, Йевдокимов, Йемелйанов тата Иванов комсомолец-стахановецсем пысăк тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем нормăна йаланах 150 процентран иртерсе тултараççĕ.

Нумай пулмаст епĕр, 1937 çула вĕçленĕ май, пуху туса иртертĕмĕр. Пухура бригадă членĕсем кăçал тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Епĕр кăçал нормăна кулленех 160 процентран кайа мар тултарса пыма пулатпăр.

Хамăр çине илнĕ обйазателствăна пурнăçлама условисем çителĕклĕ пирĕн. Бригадăра ĕç килĕшӳлĕн пыни çитменлĕхсене пĕтерсе, тухăçлăн ĕçлеме май парат.

С. Тарасов—Чукунçул строителствинчи 8-мĕш участкăри бригадир.

Бӳрократсене пула

Епĕр, Вăрнар районĕнчи Мăн Йаваш йалĕнчи колхозниксем 1937 çулăн ийуљ уйăхĕнче Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче ĕçлерĕмĕр. Çав вăхăтра ĕçленĕшĕн пирĕн иккĕмĕш участкăран 391 тенкĕ, 6-мĕш участкăран 371 тенкĕ илмеле. Анчах чунсăр бӳрократсене пула, вăл укçана халĕ те илейместпĕр. Иккĕмĕш участкăри бухгалтерине тăватă хут кайни те вырăнсăр пулчĕ. Йаланах: 10 кунран килĕр, тесе ответлеççĕ.

Кун пирки, епĕр строителствă начаљникĕ Вавилкин йулташ патне те жалăба çыртăмăр. Вăл та ответ памарĕ. Пирĕн жалăба çине ответлессине кирлĕ ĕç тесе шутламарĕ, пулас.

Н. Йакушкин.

Хĕрлĕ Çар уйавĕ умĕн

Çар ĕçне отлично вĕренме тăрăшатпăр

Епĕр, 1917—1918 çулсенче çуралнă допризывниксем, Йелчĕкри вĕренӳ пунктне çар ĕçне вĕренме пухăнтăмăр. Кăçал Хĕрлĕ Çара кайнă красноармейец Серебрйаков йулташ допризывниксем патне çыру йанă. Хăйĕн çырувĕнче Серебрйаков йулташ допризывниксене çар ĕçне отлично паллăпа вĕренме хушат, пурне те ГТО, ПВХО тата Ворошилов пек тĕл перекенсен значок нормисене парса, сывлăхсене çирĕплетсе, Хĕрлĕ Çара кайиччен пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ пултарулă çынсем пулма чĕнет.

Красноармейец çырăвне вуласа йавнă хыççăн, допризывниксем пурте çар ĕçне „отлично“ вĕренме пулчĕç, взводпа взвод, отделенипе отделени хушшинче социалисăмла ăмăрту договорĕсем турĕç.

Гер. Иванов.

Хĕрлĕ Çар йубилейне хатĕрленеççĕ

Чăвашсен йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнчи Осоавиахим совечĕ Хĕрлĕ Çар 20 тултарнă чаплă йубилейе хатĕрленме тытăнчĕ. Йубилей кунĕччен—февралĕн 23 мĕшчен—Ворошилов пек тĕл перекенсен значок нормине çĕнĕрен 20 студент, ПВХО значокĕн нормине 40 студентран кайа мар, ГСО значокĕн нормине 40 студент пама хатĕрленеççĕ.

Таван çĕршыв оборонине вĕренес тĕлĕшпе кашни группăра ăмăрту договорĕсем туса çирĕплетнĕ. Ăмăрту договорĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăма комиççисем уйăрнă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн 20 çулхи мухтавлă йубилейĕ йачĕпе студентсем противогаз тăхăнса йĕлтĕрлĕ поход тума хатĕрленеççĕ. Ку походра арçынсем 20 километр, хĕрарăмсем 10 километр каяççĕ.

Г. Иванов.

Çĕрпӳ районĕ йулса пырат

Çĕрпӳ районĕ государствă умĕнчи парăмсене парса татассипе ытла та йапăх ĕçленĕ. Йанварĕн 2-мĕшне те район государствăна обйазателствă йĕркипе тырпул памалли 1937 çулхи плана тултарайман. Ашкакай памали çулталăкри плана 88 процент, сĕт-çу планне—88 процент, çĕрулми тăрас плана—89 процент кăна тултарнă.

Уйрăмăнах район сĕт-кантăр парас плана тултарассипе йапăх ĕçлесе пырат. Йанварĕн 2-мĕшне сĕт-кантăр парас плана мĕн пурĕ те 56 процент çеç пурнăçланă. „ЧуваШЦИК“ колхоз 9 процент, „Красная Поварня“—12 проц., „Красный пахарь“—12 процент çеç тултарнă. „Камай“ колхозпа „КИМ“ колхоз пĕр килограм та паман.

Мих. Йаковлев.

Вывĕскăсем çинчен

УЛАТĂР. Кашни çурт умĕнче унта мĕнле организаци ĕçленине кăтартакан вывĕскасем çакăнса тăраççĕ. Анчах кунти вывĕскасене ăнланма питĕ йывăр. Чăвашсен кивĕ орфографине улăштарнăранпа чылай çулсем иртрес пулин те, Улатăрти учреждениесемшĕн вăл нимĕн те мар. Вĕсем „Ч“ саспалли вырăнне „Тэ“ саспаллипех усă кураççĕ, „Б“ вырăнне „П“ çыраççĕ.

Кун пек тĕслĕхсем Улатăр хулинче темĕн чухлех. Саспаллисен тăррисене лартмаççĕ: „çумĕнчи“ сăмах вырăнне „суменчи“ çыраççĕ.

Вывĕскасене вырăсларан мĕнле пĕлнĕ, çаван пек куçаркаланă. Çавăнпа та ăнланма май çук.

Хула совечĕ умĕнче пĕр кивелсе кайнă вывĕскă çакăнса тăрат. Ун çине çапла çырнă: „Хулари Канаш, Еçлекенсемпе хресченсен тата хĕрлĕ çар Тепутатэĕ“.

Тата тепĕр пысăк кĕленче алăклă çурт умĕнче çакăн пек вывĕçка пур: „Улатăр районĕн хресчен çурчĕ çумĕнчи йалхуçалăх музейĕ“. Ку вывĕска ĕнтĕ йалхуçалăх музейне пĕлтерессшĕн пулмала та, анчах пĕрре те ăна пĕлтермест. „Районĕн“ вырăнне „районен“ сăмахпа ăрпаштарса пĕтерсе, вывĕскăсене ним ăнланмала мар туса хунă.

Улатăр райĕçтавкомĕн вывĕски çапла: „Алатырский районный исполнительный комитет Раб. Крест. Красноармейских депутатов“. Ун айне чĕрнĕ те чăвашла куçарса: „Улатăр районĕнчи ĕç туса тăракан комитечĕ РХХС Канаш“, тенĕ.

Пĕр ыйту тухса тăрат: Улатăрта çакнашкал патраштарса çырнă вывĕскасем мĕçе çул çакăнса тăрĕç-ши?

Ант. Иванов.

Пысăк тупăш илчĕç

ВĂРНАР. Колљцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта халиччен курман вăйлă тырпул туса илчĕ. Тăрăшса ĕçленĕ колхозниксен амбарĕсем тĕштырăсемпе тулса ларчĕç. Акă, Павел Кузин колхозникăн семйи 210 центнер, Данил Степанов 148 центнер, Йерошин Йефим 130 центнер илчĕç.

Н. К-в.

Орфографи ыйтăвĕсене сÿтсе-йавнă май

Хаљхи орфографи правилисен ҫитменлĕхĕсем ҫинчен

Хаљхи чăваш орфографи правилисен пысăк ҫитменлĕхсемех пур, ун ҫинчен пурте пĕлеҫҫĕ. Ҫавăнпа та орфографире тĕплĕ улшăнусем пулса иртмеле.

1935 ҫулта орфографипе терминологи ыйтăвĕсене сÿтсе-йавма пухăннă ăслăлăх конференцийĕ орфографийе сисĕнмелле улшăнусемех памарĕ. Орфографири ҫитменлĕхсем—вĕҫленсе ҫитмен правилăсем—пайан кунччченех тытăнса пыраҫҫĕ. Н. Резйуков йул. ку ыйтусем пирки пичетре ҫĕнĕрен сăмах хускатни ăнсăртран пулнă ĕҫ мар, вăл кирлĕ, вăл вăхăтлă.

Чăваш орфографи правилисем ҫинчен сăмах хускатнă май, Н. Резйуков йулташăн статйине вуланă хыҫҫăн, манăн хам йенчен ҫакнашкал сĕнÿсем парас килет.

Н. Резйуков сĕнĕвĕ тăрăх пирĕн алфавит бÿджечĕ 39 саспаллийе ҫитет, халичченн усă курнă саспаллисем ҫумне Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я хушăнаҫҫĕ. Ҫĕнĕрен кĕрекен саспаллисем урăх чĕлхерен кĕрекен сăмахсене ҫеҫ ҫырма кирлĕ пулаҫҫĕ, тесе систерет Н. Резйуков.

Пирĕн орфографире халиччченех ҫырмаправилăсем тытăнса тăраҫҫĕ. Вĕсем ҫаксем: 1) пусăм хыҫĕнчи **а, о, ы** сасăсене чăвашла **ă** саспаллипе ҫыртарни: трактăр, Волăгдă, опăт т. ыт., 2) пусăм хыҫĕнчи **е** сасса *ĕ* саспаллипе ҫыртарни: агĕнт, цемĕнт, 3) йĕкĕр саспалли вырăнне пĕрер саспалли ҫыртарни: клас, граматикă, диференциаци, комунис., 4) **ец, изм, ист, сть** суффиксемпе пĕтекен сăмахсене пăстарса ҫыртарни: комсомолĕс, социалисăм, материалис, облăс, влаҫ, металис т. ыт., 5) **с** сасса **е, и** усă сасăсем умĕн **ҫ** саспаллипе ҫыртарни: ҫистемă, ҫектăр, ҫилос, ҫекрет, баҫейн, 6) **ия, ие, ий** вĕҫлĕ сăмахсене чăвашла кĕскетсе ҫыртарни: Итали, аналоги, академи, постановлени, Везуви, пролетари т. ыт., 7) сăмахсенчен **ю** сасса чăвашла **ÿ** саспаллипе пăсса ҫыртарни: бÿджет, бÿро, бÿст.

Ҫырма правилăсем ҫинче чарăнса тăма кирлĕ мар. Алфавита Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я саспаллисене йышăнсан, урăх чĕлхерен кĕрсе пыракан сăмахсене вырăс графикипех ҫырмала тумала. Ҫак принципа Н. Резйуков ҫирĕп ăнланнă.

Хаљхи орфографи правилисем ҫинчен пирĕн халĕ ҫирĕп каласмала, унăн ҫитменлĕхĕсене, кăлтăкĕсемпе шăйрăкĕсене тĕллесе кăтартса, вĕсленсе ҫитмен вырăнĕсене йакатса, ăна чăн-чăнах нурнăҫпа пĕр тан пыракан, сăмахсене тĕрĕс ҫырмали правилăсен системи туса хумала.

Орфографийе пурнăҫпа пĕр утăмлă тăвас тесен, орфографире сахалтан та ҫакăн пек улшăнусем тумала. Урăх чĕлхерен (пуринчен ытла вырăс чĕлхинчен, йе ун урлă) кĕнĕ сăмахсенче:

а) пусăм хыҫĕнчи **а, о, ы** сасăсене чăвашла улăштармасăрах, хăйсен паллисемпех ҫырмала: Гоголь, директор, опыт, вожатый.

б) пусăм хыҫĕнчи **е** сасса ҫаплах ҫырмала: табель, вексель, Юпитер, агент.

в) пусăм хыҫĕнчи **у, и** сасăсене нимĕн улăштармасăрах ҫырмала: техникум, аквариум, медик, циник, историк.

г) **э** сасса хăйĕн паллипех ҫырмала: поэт, элемент, экономика, поэма.

д) **ю, я, е** сасăсене хăйсен паллисемпех, ҫырмала: Юпитер, каюта, январь, отряд, витязь, батальон, фельетон.

е) **ъ, ь**, паллăсене ҫырмала: объект, объявление, субъект, Горький, Харьков, Ильич, январь, февраль, июль, Рязань.

ж) йĕкĕр саспаллисене вырăссен правописанийĕпе ҫырмала: класс, Донбасс, коммуна, коммунист, аппарат, ссылка, ссуда, Витте, Голландия, Марр.

з) **с** сасса **е, и** усă сасă умĕн урăхлатмасăрах, вырăс графикипех ҫырмала: система, сектор, бассейн, секрет, семафор т. ыт.

и) **ия, ие, ий** вĕҫсене чăвашла кĕскетмесĕрех ҫырмала: Конституция, Положение, Везувий т. ыт.

к) **оц, изм, ист, сть** суффиксĕсене ҫаплах ҫырмала: комсомолец, марксизм, металлист, область т. ыт.

Орфографи правилисене йышăнса ҫитересси сăмахсен пуҫламĕш форми графикине йышăннипех пĕтмест. Правилăсен тата пирĕн чĕлхене вырăс графикипе кĕнĕ сăмахсене ытти формăсенче (хисеп, падеж) мĕнле ҫырмалине те кăтартса памала. Ҫакă вăл йавăртарах ĕҫ. Ҫакна—сăмахсене хисеппе падеж сыпăкĕсемпе тĕрĕс ҫырассине—чăваш чĕлхийĕн вĕҫлев принципĕсемпе килĕштерсе тумала пулаť. Епĕ ытти чĕлхерен кĕнĕ сăмахсен вĕсленÿри хăшпĕр уйрăмлăхĕсене кăтартса парасшăн.

1) Хупă сасăпа пĕтекен рынок, фронт йышши сăмахсем, **изм, ист, сть** суффикспа пĕтекен сăмахсем (социализм, чекист, повесть), **ь** паллăпа пĕтекен пур сăмахсем те (князь, октябрь, июль), **ый, ий** вĕҫпе пĕтекен сăмахсем (пролетарий, вожатый) тĕп вĕҫленÿн падеж сыпăкĕсене йышăнаҫҫĕ: рынок—рынок-ăч, рынок-а, рынок-па т. ыт, чекист—чекист-ăн, чекист-а, чекист-па т. ыт, повесть—повестĕн, повест-е, повест-пе т. ыт., октябрь—октябр-ĕн, октябр-е, октябрьпе т. ыт. вожатый—вожатый-ăн, вожатый-а, вожатыйпа т. ыт.

2) **ец** суффикспа пĕтекен сăмахсем тĕп вĕҫленÿн падеж сыпăкĕсене йышăнаҫҫĕ: а) суффикс умĕн **е, и** усă сасă пулсан, тухса ÿкекен **е** сасă вырăнне **й** сасă кĕрсе ларать (партиец—партийц-ăн, партийц-а, партийц-па т. ыт., красноармеец—красноармейц-ăн, красноармейц-а, красноармейц-па т. ыт., б) суффикс умĕн **л, н** хупă сасăсем пулсан, тухса ÿкекен **е** сасă вырăнне **ь** кĕрет: комсомолец—комсомольц-ăн, комсомольц-а, комсомольц-па т. ыт., в) суффикс умĕн ытти хупă сасăсем пулсан, **е** сасă вырăнне нимле сасă та хутшăнмасť: орденоносец—орденоносц-ăн, орденоносц-а, орденоносц-па, т. ыт. ситец—ситц-ăн, ситц-а, ситц-па т. ыт.

3) вĕҫĕ йĕкĕр сасăсемпе пĕтекен сăмахсем тĕп вĕҫленÿн падеж сыпăкĕсене йышăнаҫҫĕ: финн—финн-ăн, финн-а, финн-па т. ыт., Марр—Марр-ăн, Марра, Марр-па т. ыт., Вальтер Скотт—Вальтер Скотт-ăн, Скотт-а, Скотт-па т. ыт., **с** саспаллипе пĕтекен сăмахсенĕн пĕрреллĕ хисеп формине: класс—класс-ăн, класса, класс-па т. ыт. Нумайлă хисеп формине йышăннă чухне пĕр **с** тухса ÿкет: классем—классенĕн, клас-сен-е тата ыт. те. Нумайлă хисеп формине **л, н** сасăра пĕтекен сăмахсем пуҫламĕш формăлах йулаҫҫĕ: финн-сем—финн-сен-ĕн, финн-сен-е, финн-сем-пе т. ыт.

Н. Резйуков хăйĕн сĕнĕвĕнче Л, Н, С сасăсене сăмахсен пуҫламĕш формипче ҫеҫ ҫыртарасшăн, ытти падежсемпе формăсенче вăл сасăсене иккĕлетсе ҫырма кирлĕ мар, тет вăл. Ҫакă йурăхсăр сĕнÿ, вăл ҫырăва пăтрашусем ҫеҫ кÿме пултарать.

4) **ия, ие** вĕҫсемпе пĕтекен сăмахсем ҫапла вĕҫленмеле: Италия—Итали-п, Итали-й-е т. ыт.

5) **а, е** сасăсемпе пĕтекен сăмахсем (система, Тула, Витте) „лаша", „ĕне" сăмахсем вĕҫленнĕ пек вĕҫленеҫҫĕ.

Ҫаксене йышăнса ҫитме халех орфографи словарне хатĕрлемеле, вăл орфографи йенчен йăрăр сăмахсене мĕнле ҫырмалине кăтартса паракан словар пулмала.

Чăваш орфографинче ҫак хускатнă улшăнусем пулса иртмелех. Унсăрăн малашне те ҫырура пăтрашусем пулаҫҫĕ.

Орфографири улшăнусем чăваш грамматикине ҫĕнĕ терминсемпе, ҫĕнĕ правилăсемпе пуйанлатаҫҫĕ, грамматикă терминĕсене тĕрĕс ҫырма май параҫҫĕ. Орфографири улшăнусем шкул ачисемшĕн те, вĕренекенсемшĕн те, пичет ĕҫĕнче ĕҫлекенсемшĕн те питĕ кирлĕ. Орфографири улшăнусем шкулсенче чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхине вĕрентессине тĕпренех лайăхлатмала.

П. НИКИФОРОВ.

КĔСКЕН

★ *Ишлей районĕнчи „Красноармеец" колхозăн кăҫалччен нимĕнле* культурăлă сурт та пулман. Кăҫал колхоз 250 сыны вырнаҫмалăх ҫĕнĕ клуб лартнă. Клубра кашни ернерех спектакљ йе вечĕр пулса иртет. Клуб хаҫат-журнал та ҫырăнса илет.

★ Трак районĕнчи Итмар йалсоветне кĕрекен „Майăн 1-мĕш" колхоз кăҫал радиоприйомник лартнă. Каҫсеренех колхозниксем колхоз правленине пухăнса ушкăнпа тĕрлĕрен докладсем, концертсем итлеҫҫĕ.

Колхоз правлени кашни колхозник хуҫалăхĕнех малашне радио кÿртсе памалăх хатĕрленет.

★ ТУрхан районĕнчи Липовкăри почтаљйон Данилов кашни хуҫалăхах 1938 ҫулшăн хаҫат-журналла тăвассишĕн тăрăшса ĕҫленĕ. Мĕн пурĕ 2213 тенкĕ те 15 пуслăх тĕрлĕрен хаҫат-журнал сарнă. Ҫыраннă хаҫат-журналсене вăл подписчиксем патне вăхăтра ҫитерет.

Хаҫат-журнал сарасси малала та пырать.

Совет Сойузĕ тăрăх

** 1938 ҫулта Совет Сойузĕнчи йалхуҫалăхлă районсене парфюмери таварĕсемпе туалет супăнĕсене 445 мĕлйун тенкĕлĕх кÿрсе килеҫҫĕ, вăл 1937 ҫулхипе танлаштарсан 40 процент ытларах пулать.

** „Уралзолото" тресчĕн Коҫвинскри прииск управленине кĕрекен инҫетри ҫурҫĕр участкинче хăйтĕллĕн ÿсекен платина чăмăркки тупнă, унăн йавăрĕшĕ 4 килограм тайать.

** Метрополитенăн Покровски радиусĕнче йулашки ĕҫсене туса ҫитереҫҫĕ. Йанварĕн 10-мĕшĕнче ҫĕнĕ лини тăрăх сăнав тумала ҫÿреме пуҫлаҫҫĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕррĕмĕш ҫеҫҫийĕ уҫăлнă кун, Аслă Совет депутачĕсене Покровски радиус тăрăх илсе ҫÿреме шутлаҫҫĕ.

** Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Ҫарĕ 20 ҫул тултарнă йатпа, Осоавиахимăн Центăрти стрелковăй спорт клубĕ февралĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа 20-мĕшне ҫитиччен стрелковой спорт клубĕсен Пĕтĕм Сойузри заочнă ăмăртуне организацилет.

(ТАСС).

Аслă Совет депутатне И. И. Гудова партине илнĕ

Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан станкозаводри парторганизаци чаплă стахановеца, орденоносеца, ССР Сойуз Аслă Совет депутатне И. И. Гудов йулташа партине илме йышăннă. Йанварĕн 9-мĕшĕнче партин Мускав хулинчи Ленинский райкомĕ ҫав решенине ҫирĕплетнĕ.

Партине илме ыйтса панă заявленинче Гудов йулташ ҫапла ҫырать:

„Парти организацине—хамăн пĕтĕм вăйа пирĕн социалисăмлă тăван ҫĕршыва чечеклентерессишĕн кĕрешнĕ ҫĕре паратăп, тесе ĕнентеретĕп. Манăн пурнăҫри пĕртен пĕр тĕллев вăл—пирĕн партишĕн вĕҫне ҫитийех тĕрĕс ĕҫлесе пырасси тата вăл йертсе пынипе коммунисăм ҫĕнтерÿвĕшĕн кĕрешесси".

(ТАСС).

ЙУТҪĔРШЫВСЕНЧЕ

ВЕНА, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). Базелри „Национал цейтунг" хаҫат Лондонран ҫапла пĕлтерет: Аљба герцога „Франкон Англири официала агентне" лартнăранпа Англире Испани фашисĕсем майлă пропагандă тăвасси вăйланнă. Ку пропагандă,—тет хаҫат,—Германи фашисĕсемшĕн пропагандă тăвакан тата Галифакс лорд таврашĕнче хÿтлĕх тупакан Лондон ситин таврашĕнче ҫеҫ ăнăҫлă пулать.

ХУҢКОУ, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). Ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен Китай халăхĕ ҫĕршыва сыхлама хăйех мобилизацилени ҫинчен сведенисем пыраҫҫĕ. Ку мобилизаци йухăмĕнче ҫамрăксем малти ретре пыраҫҫĕ.

Халăхсен хăйсен ирĕкĕпе мобилизациленнĕ отрйачĕсенчен уйрăм ҫар тăваҫҫĕ. Вăл ҫара Йу Хаң-Моу йертсе пырать. Ун помошникĕсем малтан 19-мĕш ҫар командуйушчийĕ пулнă паллă генерал Цай Тин-Кай тата Чеў Миң-Ҫу генерал пулаҫҫĕ.

ЛОНДОН, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). „Дейли гераљд" хаҫат корреспонденчĕ Истермен йанварĕн 5-мĕшĕнче Румыни премйерĕпе Гогапа калаҫнă. Корреспондента Гога вăл парламента пухăначчченех салатса йарасси тата ҫĕнĕ суйлавсем тăвасси ҫинчен каласа панă. Ҫур мĕлйун йеврейа,—тенĕ малала Гога,—граждан тивĕҫлĕхĕсĕр хăвараҫҫĕ тата вĕсене Румыни влаҫĕсем ҫĕршывран кăларса йама хăтланаҫҫĕ. Румыни конституцине улăштарнă май суйлав системине ҫĕнĕрен тăваҫҫĕ тата „хĕсĕк парламентпа" „корпоративлă сенат" тăваҫҫĕ. Йеврейсене хирĕҫле политикă ыйтуне,—тесе кăтартнă Гога,—Лига нациумне лартаҫҫĕ.

ЖЕНЕВА, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). Румыни правителстви 1919 ҫулхи декабĕрĕн 9-мĕшĕнче тунă договора питĕ пысăккăн пăснăшăн Женеври йеврейсен националисла организацийĕсем Лига нацийе Румыни йеврейĕсĕн хутне кĕнĕ ҫĕре хутшăнма ыйтаҫҫĕ.

ЛОНДОН, йанварĕн 8-мĕш (ТАСС). Йамайкă утравĕ ҫинче забастовкă тăвакан рабочисемпе полици хушшинче ҫапăҫу тухса кайнă, „Таймс" хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, ҫав ҫапăҫура 40 рабочи аманнă, 60 сынна арĕсленĕ.

Пољшăра 1 мĕлйун ҫын туберкуљозпа чирлĕ

ВАРШАВА, йанварĕн 9-мĕш. (ТАСС). Пољшă врачĕсен ушкăнĕ „Иллюстрованы кÿрьер цозенный" хаҫатра Пољшăра туберкуљоз сарăлса вăйланни ҫинчен статйа пичетлесе кăларнă. Статйара: „Пољшăра туберкуљоз социаллă инкек пулса тăрать, вăл пĕрле илсе шутланă мĕн пур йерекен чирсенчен ҫынсене виҫĕ хут ытларах вĕлерет"—тенĕ. Статйара илсе кăтартнă тулли мар хисепсем тăрăх, Пољшăра туберкуљозпа кашни ҫулах ҫĕр пин ҫын вилет, пĕтĕмпех хуларипе йалти ĕҫсынисем пĕр мĕлйун ҫын ытла туберкуљозпа чирленĕ, вĕсенчен 480 пин сынĕ таврана хăрушлăх тумалах чирлĕ.

Туберкуљоз чирĕпе халăх вилесси йенчен,—тесе ҫыраҫҫĕ статйа авторĕсем, — Пољшă Йевропăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Мускава екскурҫине

ВĂРНАР, 8/1. ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ—ЧАССР Тĕпĕҫтăвкомĕ председателĕн заместителĕ С. К. Коротков хăйĕн тăван колхозникĕсене манмасť, вăл Кољцовкăри Сталин йачĕпе хисепленекен колхоз колхозникĕсен чи йуратнă ывăлĕ. С. К. Коротков вăл колхоза пĕтĕм республикăра тата Совет Сойузĕнче те малта пыракан колхоз туса хучĕ. Уншăн ырми-канми ĕҫленĕ.

Акă пайан, йанварĕн 8-мĕшĕнче, С. К. Коротков Аслă Советăн пĕрремĕш ҫеҫҫине кайать, Коротковпа пĕрлех унăн колхозникĕсем те Мускава екскурҫине кайаҫҫĕ. Екскурҫине кайакан колхозниксем пĕтĕмпе 35 ҫын, вĕсенчен 13 хĕрарăм. Кашнийĕх пысăк хаваслă. Нумайĕшĕ вĕсенчен Мускавра пĕрремĕш хут ҫеҫ пулаҫҫĕ.

Екскурҫине кайса, колхозниксем Мускава кураҫҫĕ, Мускав рабочийĕсем йепле ĕҫленипе паллашаҫҫĕ. Ҫавăн пекех Ленин Мавзолейне, Метрона т. ыт. ҫĕре те кĕрсе кураҫҫĕ.

— Епĕ Мускавра 1886 ҫулта пулнă,—тет Мускава екскурҫине кайакан 74 ҫулхи ватă колхозник Хљанов,—ун чухне епĕ Горький хулине ҫитиччен ҫурран утса кайнă. Мускавĕ те ун чух чапсăр. Халĕ ҫĕнĕ Мускавра пулса епĕ унпа лайăх паллашатăп, Ленин Мавзолейне, Метрона тата хамăрăн йуратнă учителе Сталин йулташа та куратăп.

Е. Волков.

Турăсăрсен 15 кунлăх курсĕ

ТРАК. Ҫак кунсенче ҫеҫ Тракра тĕне хирĕҫ кĕрешкен агитаторсене хатĕрлекен 15 кунлăх курс уҫăлчĕ. Курсра 22 ҫын вĕренет. Вĕсенчен чылайăшĕ комсомолецсем, вулавҫурт пулăхĕсемпе йалти турăсăрсен организацисен руководителĕсем.

Курсантсем йанварĕн 5-мĕшĕнче пĕр номĕр стена хаҫачĕ кăларчĕҫ, ҫав кунах виҫĕ кунлăха йалсене теорипĕ вĕреннине практикăра ĕҫлесе ҫирĕплетме саланчĕҫ. Вĕсем йалсенче пупсен праҫникне-раштава уйавлани сийенĕ ҫинчен доклад семпе лекцисем туса пачĕҫ, йалти турăсăрсен организацисене ҫирĕплетрĕҫ.

Закамский.

Ишлей районĕнчи сутĕҫ пайĕ ҫумĕнче вăрҫăлă турăсăрсен 15 кунлăх курсĕ уҫăлчĕ. Курсра пĕтĕмпе 20 ҫын вĕренет. Курсран вĕренсе тухнă хыҫҫын, вĕсем йалсенчи турăсăрсен ĕҫне йĕркелесе пыракан организаторсем пулаҫҫĕ.

Пегасов.

Чиркÿрен шкул тăваҫҫĕ

КУҪЛАВККА. Туканаш йалсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чиркÿ ултавне ăнланса илчĕҫ. Ҫавăнпа та вĕсем чиркÿрен шкул тума йышăнчĕҫ. Шкула ҫак кунсенчех туса пĕтереҫҫĕ. 1935—36—37 ҫулсенче, ҫурт пулман пирки, Туканаш йалсоветĕнчи ачасем кашни кунах икĕ сменăпа вĕреннĕ. Халĕ чиркÿрен шкул тусан, пур ачасене те пĕр сменăпа вĕренме ҫурт ҫитет.

Кућтурăлă таварсем сутаҫҫĕ

Иккасси (Шупашкар р.) йалĕнчи магазин кућтурăлă таварсене ăнăҫлăн сутать. Нумайăх пулмасť магазин радио хатĕрĕсем кÿрсе килчĕ. Вĕсене кĕске вăхăтрах сутса пĕтерчĕҫ. Пурĕ 1.678 тенкĕлĕх сутнă.

1937 ҫулăн йулашки кунĕсенче магазин 16 патефон сутрĕ. Вĕсемпе пĕрле 2.678 тенкĕлĕх патефон пластинкисемпе йĕпписене сутнă.

Ҫав кунсенчех Иккасси магазинĕ 1.795 тенкĕлĕх 1.385 екземпљар кĕнеке, хут-кăранташсем 2000 тенкĕлĕх сутма ĕлкĕрчĕ. Сутнă кĕнекесем хушшинче Ленин—Сталин произведенийĕсем ытларах. Ҫак цыфăрсем вĕсем колхозниксен пурнăҫĕ пуйанланса, кућтурланса пынине кăтартаҫҫĕ.

Техникăна вĕренмели кружок

СĔНТĔРВĂРРИ. Судоверфре баржăсем тунă ҫĕрте ĕҫлекен рабочисем хăйсен пĕлÿлĕхне ÿстерме тăрăшаҫҫĕ. Рабочисем хушшинче техникăна вĕренес тĕлĕшпе плотниксен, тимĕрҫсен кружокĕсене уҫнă. Ку кружоксенче 30 ҫын вĕренет. Кружок занятийĕсем ернере 3-шер хут пулаҫҫĕ.

„Ҫурҫĕр пољусĕ" станцинче

Йанварĕн 9-мĕшĕнче 18 сехетре куҫса ҫÿрекен „Ҫурҫĕр пољусĕ" станци ҫурҫĕр широтин 78 градусĕпе 41 минутинче, хĕвеланăҫ долготин 9 градусĕпе 27 минутинче пулнă. Ҫурҫĕр-хĕвеланăҫ йенчен 5 баллă ҫил вĕрет. Ҫĕр ҫумĕпе йур вăйлăн вĕҫтерет. Температурă—29 градус сивĕ.

(ТАСС).

ХРОНИКА

** ССР Сойуз Тĕпĕҫтăвкомĕ П. И. Смирнов йулташа ССР Сойузĕн Тинĕс-Ҫар Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма ҫирĕплетнĕ.

** ССР Сойуз Тĕпĕҫтăвкомĕ И. С. Исаков йулташа ССР Сойузĕн Тинĕс-Ҫар Халăх Комиссарĕн иккĕмĕш заместителĕ пулма ҫирĕплетнĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

КАНАШ-ШУПАШКАР чукунҫул строителстви Управленин кадрсем хатĕрлекен пайĕ

массăлă квалификацисене хăпартас

тĕлĕшпе

З уйăхлăх курс туса иртерет

Курс плотниксен, каменщиксен тата штукатурсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе ĕҫлет.

Вĕренессине ĕҫрен уйăрăлса вĕренме пулать.

Вĕренсе тухнă хыҫҫăн Канашпа Шупашкар хушшинче тăвакан чукунҫул ҫинче ĕҫлемеле.

Вĕренме 18 ҫултан пуҫласа 35 ҫула ҫитиччен, аван сывлăхлисене, пуҫламĕш шкулăн 4 класне вĕренсе тухнисене илеҫҫĕ, тата хăйĕн квалификацийĕпе икĕ ҫултан кайа мар ĕҫленĕ стаж кирлĕ.

Курса вĕренме илнисене пурне те уйăхне 150 тенкĕрен пуҫласа 200 тенкĕ таран стипенди параҫҫĕ, обшчежити пур.

Вĕренес текенсен йанварĕн 13-мĕшĕнче сак адреспа пымала; ШУПАШКАР ХУЛИ, ХĔРЛĔ ПЛОЩЧĔД, 23 №-лĕ ҪУРТ КАНАШ-ШУПАШКАР ЧУКУНҪУЛ СТРОИТЕЛСТВИН УПРАВЛЕНИЙĔ.

Хăйсемпе пĕрле ҫак документсем кирлĕ: паспăрт, военный билет, вĕренни ҫинчен тата социаллă *положенин* ĕнентерĕвĕсем, йулашки вăхăтра ĕҫленĕ ҫĕртен илнĕ справкă, хăй сывлăхне кăтартакан справкă, тата одейалă-ҫытар илсе килмеле.

Кадрсем хатĕрлекен пай.

Вăрманпродторгăн Шупашкарти кантурĕ

(Малтан ОРС пулнă)

Руководствăна ҫĕнетнĕ май пур организацисене, уйрăм ҫынсене (Малтан ĕҫленĕ рабочисемпе служашчисене) Шупашкарти Вăрманпродторгран укҫа-тенкĕ илес пирки претензисем пур пулсан, претензисене 1938 ҫулхи йанварĕн 15-мĕшĕччен тăратма ыйтать.

Йанварĕн 15-мĕшĕ иртсен претензисене йышăнмаҫҫĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—2

Чăвашпромкассăн Кувшинкăри 12 лет ЧАССР йачĕпе тăракан канмали ҫурчĕ

Пурне те пĕлсе тăма ҫакна пĕлтерет. Канмали ҫурт 1938 ҫулта канма путовкăсене укҫала сахал сутать. Ҫавăнпа та, 1938 ҫулшăн путовкăсем илес текен организацисен халех чăвашпромкассăпа килĕштерÿсем тумала.

ЧĂВАШПРОМКАССĂ

Адрес: Шупашкар, Калинин урамĕ, 49.

Академи театрĕнче

Йанварĕн 11-мĕшĕнче Вырăсла спектакљ

ЛАВРЕНЕВ

„РАЗЛОМ"

(4 пайлă)

С. С. Марťагин режиҫҫор лартать.

Талон № 79. Абонемент № 8. Талон №11

Пур учителсене тата пуҫламĕшпе вăтам шкулта ĕҫлекенсен профеҫҫи сойузĕн членĕсене

Чăваш республикинчи Комитет хăйĕн сойузĕнче тăракан пур членĕсене те ҫакна пĕлтерет: 1938 ҫулта канмали ҫуртсене, курортсене, санаторисене тата инҫетри екскурҫисене каймали путовкăсене укҫала илсе кайĕлеме зайавкăсене халех памала.

Путовкăсем илес пирки зайавкăсене Сойузăн районсенчи комитечĕсене февралĕн 1-мĕшĕччен тăратмала. Путовкăсене мĕнле майпа, мĕн хак тÿлесе илмелине районсенчи комитетсем ăнлантарса параҫҫĕ, йе Республикăри Комитетран ҫыру йăрса пĕлме пулать.

2—2

Чăвашполиграфтреста

ОПЫТЛĂ ЕКОНОМИСТСЕМ

ТАТА

БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР

КИРЛЕ

Ĕҫукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Шупашкар хули, Пичет ҫурчĕ, тăваттăмĕш хутлăх, 35-мĕш пÿлĕм.

3—2

Чăваш АССР Сыхăну Управленине

йалан ĕҫлеме кирлĕ:

1. Йурист-консуљт
2. Аслă бухгалтер
3. Бухгалтер—2 ҫын
4. Контрољор—укҫа куҫарас йенĕпе ĕҫлеме 2 ҫын
5. Економист-статистик.
6. Машинистка (квалификацилĕ)
7. Економист
8. Уборщчица—1 ҫын
9. Курйер—1 ҫын.

Ĕҫукçи государствă нормированийĕ тăрăх.

Ҫак адреспе ыйтмала: Чăваш АССР Сыхăну Управленийĕ. Иккĕмĕш хутлăх, 24 № пÿлĕм. Телефон №—0—41. Кадрсен уйрăмĕ.

3—2

Чăваш АССР Республикинчи Шалти суту-илљу Халăх Комиссариачĕн

ВĔРЕНÿ КОМБИНАЧĔ

прилавкă работникĕсене вĕрентмели 3 уйăхлăх курс организацилет.

Курса Чебторг, „Бакалей" магазинĕ тата Вăрманпродторг организацийĕсем панă командировкăсем тăрăх ҫеҫ йышăнаҫҫĕ. Обшчежити, стипенди тата хватер пулмасť.

ДИРЕКЦИ

Чăвашавтогужтреста

Бухгалтер-ревизор

Аслă бухгалтерсем

Бухгалтерсем

Плановик-економист

тата

запас пайсене тăратас тĕлĕшпе ĕҫлекен

Ответлă исполнител

2—1 **КИРЛĔ**

Шупашкарти „Пекарь" ертелĕ

ТĔРЛĔРЕН СУРТ

сушкăсем, вĕтĕ сушкăсем, кренделсем

ПĔҪЕРСЕ КĂЛАРАТЬ

Районсенчи суту-илÿ организацийĕсене те зайавкăсем тăрăх пĕҫерсе парать.

2—2 ПРАВЛЕНИ.

1937 ҫулхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнч

ПИНЕР РАЗЙЕСĔНЧЕН

400 килограм мучала тийенĕ лавлă

ЛАША ҪУХАЛНĂ

Паллăсем: тĕсĕ шурăкăвак, ҫичхи сытăмйенче, хăмăт тивнĕ, ҫÿллĕш 138 сант., чĕркуҫсирен аялала кăвакрах.

Пĕлекенсен ҫак адреспа пĕлтермеле: ЧАССР, Ишлей районĕ, Киров йачĕпе тăракан колхоз.

Правлени.

„Чăваш коммунĕ" ҫырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алҫырăвĕсене кайала памаҫҫĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 19. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. 1—1 п. л.